# 3–4 ÇУЛХИ АЧАСЕНЕ МАТЕМАТИКĂН АНСАТ ĂНЛАВĔСЕМПЕ ПАЛЛАШТАРАССИ

**Вĕрентӳллĕ вăйăсен пуххи**

Шкул умĕнхи вĕренĕвĕн программине пурнăçлакан воспитательсем валли хатĕрленĕ меслет кăтартăвĕ

Шупашкар
2022

УДК 373.2
ББК 74.102
В 53

ЧР ВМХПВ «Чӑваш Республикин вӗренӳ институчӗ» БУ

Пухса хатӗрлекенӗсем:
***И.В. Ядранская***, Чӑваш Республикин вӗренӳ институчӗн регион аталанӑвӗ центрӗн ертӳҫи,
***Л.А. Смирнова***, Чӑваш Республикин вӗренӳ институчӗн регион аталанӑвӗ центрӗн методисчӗ

Пособие хатӗрлеме хутшӑннӑ педагогсем:
*О.Л. Васильева*, Чӑваш Республикин профессилле вӑтам пӗлӳ паракан Канашри педагогика колледжӗн преподавателӗ,
*Т.В. Плешкова*, Чӑваш Республикинчи Комсомольски районӗн Анат Тимӗрчкассинчи пӗтӗмӗшле пӗлӳ паракан тӗп шкул воспитателӗ,
*В.О. Сенатова*, Чӑваш Республикин Комсомольски районӗн «Пучах» ача сачӗн воспитателӗ,
*Н.С. Шурбина*, Чӑваш Республикин Комсомольски районӗн Ҫӗнӗ Мӑратри пӗтӗмӗшле пӗлӳ паракан тӗп шкулӑн Тукайӗнчи уйрӑм тытӑмӑн воспитателӗ.

В 53 **3-4 ҫулхи ачасене математикӑн ансат ӑнлавӗсемпе паллаштарасси** / И.В. Ядранская, Л.А. Смирнова пухса хатӗрленӗ. – Шупашкар: ЧР ВМХПВ «Чӑваш Республикин вӗренӳ институчӗ» БУ, 2022. – 56 с.

Кӗнекере ачасемпе ирттермелли вӑйӑсен тӗллевне, йӗркине ҫырса панӑ. Вӗренӳ хатӗрне «Ача ҫуралнӑранпа шкула кайиччен» программӑпа ӗҫлекен педагогсене, ҫавӑн пекех шкул ҫулне ҫитмен ачасене математика ӑнлавӗсемпе паллаштаракансене пулӑшас тӗллевпе йӗркеленӗ.

**УДК 373.2**
**ББК 74.102**

© И.В. Ядранская, Л.А. Смирнова, пухса хатӗрлени, 2022
© ЧР ВМХПВ «Чӑваш Республикин вӗренӳ институчӗ» БУ

# УМĔН КАЛАНИ

Вĕрентӳллĕ ваййăсен пуххине 3–4 çулхи ачасене математикăн ансат ăнлавĕсемпе паллаштарма хатĕрленĕ. Кĕнекере ачасемпе иртгермелли 32 вăййă тĕллевĕсемпе йĕркине çырса панă.

Программăпа килĕшӳллĕ 3–4 çулхи ачан япаласен тĕрлĕ пахалăхĕсемпе паллашмалла, япаласен уйрăмлăх паллисем пулнине ăнкармалла. Тĕнчене пĕлмешкĕн унăн куçпа, хăлхапа, хыпашлав туйăмĕпе туллин усă курмалла; алăпа пысăк мар хусканусем тумалла, куç курнине ăса хывмалла.

Ку тапхăрта ача япаласен формине (*çаврашка, тăваткал, виç кĕтеслĕх, шар, куб*), тĕсне (*хĕрлĕ, кăвак, сарă, симĕс, шурă, хура*), пысăкăшне тата ытти паллисене (*пысăк, пĕчĕк, пысăкрах, пĕчĕкрех*) чухлама хăнăхать, япалан вăрăмăшне (*кĕске, вăрăм*), çӳллĕшне (*çӳллĕ, лутра*) сăмахпа палăртма, пысăкăшне, вăрăмăшне кура танлаштарма (*пĕр-пĕрин çине е юнашар хурса*) вĕренет. Кăтартнă тĕслĕхпе япаласене ушкăнлама хăнăхать.

Ача ăсĕнче нумайлăх тата пĕррелĕх ăнлавĕсем çирĕпленеççĕ, «Миçе?» ыйтăва тĕрĕс хуравлама *нумай, пĕрре, пĕрре те çук* сăмахсемпе, «Хăшĕ ытларах (сахалрах)?» ыйтусене ăнланса *çавăн чухлех, сахалрах, нумайрах* сăмахсемпе хуравлама вĕренет.

Ачасем харпăр хăй ӳчĕн пайĕсене уйăрма, япаласен хутлăхри вырăнне сăмахпа палăртма хăнăхаççĕ (*çӳлте, аялта, хыçра, малта, умран, сулахайра, сылтăмра*).

Вăхăтпа паллашнă май ача талăк тапхăрĕсене уйăрма, сăмахпа калама пултарать.

Пособи «Ача çуралнăранпа шкула кайиччен» (Н.Е. Вераксы, Т.С. Комарова, М.А. Васильева редакциленĕ) программа çинче никĕсленет, ачасене математикăн ансат ăнлавĕсемпе паллаштарать.

Асăннă пособи воспитательсене вĕренӳ ĕçĕ-хĕлĕнче пулăшу хатĕрĕ пулса тăрать.

# АВӐН УЙӐХӖНЧЕ ИРТТЕРМЕЛЛИ ВӖРЕНТӲЛЛӖ ВӐЙӐСЕМ

*1-мӗш вӑйӑ*

## Япала пытармалла выляр-и?

***Тӗллевсем:*** шара тата кубика уйӑрма, сӑмахпа калама хӑнӑхтарасси, пӗлнине ҫирӗплетсе хӑварасси.

***Кӑтарту хатӗрӗсем***: пысӑк тата пӗчӗк хӗрлӗ шарсем, пысӑк тата пӗчӗк симӗс кубиксем; хӗрлӗпе симӗс тӗслӗ коробкӑсем, упа, вылямалли тиев машини.

В ӑ й ӑ  ю х ӑ м ӗ

Воспитатель группӑна вылямалли тиев машини илсе кӗрет. Грузовик ҫинче упа, шарсем, кубиксем пур.

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, пирӗн пата грузовикпе мӗн килчӗ? *(Упа.)* Упа грузовикпе мӗн илсе килчӗ? *(Шарсем, кубиксем.)*

Воспитатель ачасене шар тупма хушать.

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, эсир мӗн тупрӑр? *(Шар.)* Ку шар мӗн тӗслӗ? (*Хӗрлӗ.*)

Воспитатель ачасенчен шарпа мӗн-мӗн тума пултарнине ыйтать, ӑна *кустарса, ывӑтса* кӑтарттарать. Ҫакӑн пек ӗҫех кубиксемпе тӑваҫҫӗ. Ачасем кубиксене илеҫҫӗ те: «Ку кубик», – теҫҫӗ. Воспитатель ыйтнипе тата кӑтартнипе кубик енӗсене алӑпа кӑтартса параҫҫӗ (*яка*), сӗтел ҫине хураҫҫӗ (*кубике тӗрлӗ енлӗ хума пулать*).

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, япала пытармалла выляр-и? Атьӑр эпир мӗнле выляма пултарнине упана кӑтартар.

Воспитатель пӗр ачана хӑй патне чӗнет, ӑна пӗр аллине шар, теприне кубик илме хушать те вӗсенчен пӗрне ҫурӑм хыҫне пытарма ыйтать. Ыттисен ҫак ача ҫурӑм хыҫне мӗнле фигура пытарнӑ тата унӑн аллинче мӗнле фигура юлнине пӗлмелле. Вӑйӑ темиҫӗ хут иртет.

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, упа выляса ывӑнчӗ, вӑл сиртен шарсемпе кубиксене коробкӑсене вырнаҫтарса хума пулӑшу ыйтать. Шарсене хӗрлӗ коробкӑна, кубиксене симӗссине хумалла тет.

Ачасем кубиксене, шарсене коробкӑна хураҫҫӗ, мӗн хунине каласа параҫҫӗ.

В о с п и т а т е л ь (пӗтӗмлетсе). Ачасем, хӗрлӗ коробкӑна мӗнле фигурӑсем хутӑр? (*Шарсем*). Миҫе шар? (*Нумай*). Симӗс коробкӑна мӗнле фи-

гурăсем хутăр? (*Кубиксем*). Миçе кубик? *(Нумай).* Коробкăсен тĕсĕсем пĕр пек-и? *(Çук).* Шарсемпе кубиксен тĕсĕсем пĕр пек-и? *(Çук).* Шарсемпе кубиксем тата мĕнпе уйрăлса тăраççĕ? *(Пысăк тата пĕчĕк).*

Упа ачасене тав тăвать те вĕсемпе сыв пуллашать.

*2-мĕш вăййă*

## Пуканесем хăнара

***Тĕллевсем:*** япаласене калăпăшне кура уйăрасси, *пысăк, пĕчĕк* сăмахсене пуплеве кĕртесси.

***Кăтарту хатĕрĕсем***: чăваш тумĕ тăхăннă пысăк тата пĕчĕк пуканесем, пысăк тата пĕчĕк краватьсем, 3-4 пысăк кубик, пĕчĕк кубиксем (кашни ача валли 3-4 кубик).

В ă й ă ю х ă м ĕ

Воспитатель ачасене хăнана килнĕ пуканесемпе паллаштарать.

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, пирĕн пата хăнана пуканесем килнĕ. Пуканесем, эсир мĕн ятлă?

Воспитатель сассине улăштарса пуканесемшĕн те калаçать.

П у к а н е с е м. Эпĕ Марине ятлă. Эпĕ Урине ятлă. Ачасем, эсир мĕн ятлă?

Ачасем хăйсен ячĕсене калаççĕ.
Ачасем воспитательпе пĕрле пуканесене танлаштараççĕ, пĕр пукане пысăк, тепри пĕчĕк пулнине палăртаççĕ.

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, пирĕн хăнасем çул çинчен ывăннă, вĕсем выртса канасшăн. Ак кунта вара, вĕсем валли краватьсем те пур. Пăхăр-ха краватьсем çине. Вĕсем пысăкăшпе пĕр пекех-и?

А ч а с е м. Çук, пĕр пек мар.

В о с п и т а т е л ь. Пысăк кравачьне кăтартăр-ха (ачасем кăтартаççĕ). Халĕ пĕчĕккине кăтартăр (ачасем кăтартаççĕ). Марине (пысăк пукане) ăçта çывăрма пултарать-ши, пысăк е пĕчĕк кроват çинче?

А ч а с е м. Пысăк кроват çинче (кăтартаççĕ).

В о с п и т а т е л ь. Халĕ Урине (пĕчĕк пукане) валли кроват тупатпăр, кăтартăр (ачасем кăтартаççĕ). Урине ăçта çывăрма пултарать-ши, пысăк е пĕчĕк кроват çинче?

А ч а с е м. Пĕчĕк кроват çинче (кăтартаççĕ).

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, атьăр-ха пуканесене выртса канма сĕнер.

В о с п и т а т е л ь п е а ч а с е м. Марине, выртса кансам тархасшăн. Урине, пирĕн патра канса илсем тархасшăн.

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, пуканесене хăвăртрах çывăрса кайма сăпка юрри юрласа парар-и? Мĕнле сăпка юрри пĕлетпĕр-ха эпир?

Нянине-паппине,
Паппине-нянине.
Лăштăм-лăштăм ярăнма,
Шăппăн-шăппăн çывăрма.

Воспитатель ачасемпе пĕрле темиçе хут юрлать.

П у к а н е с е м. Ачасем, эсир питĕ маттур! Эпир кантăмăр, атьăр, кубиксенчен кермен купаламалла вылятпăр!

Воспитатель ачасен умне пысăк тата пĕчĕк кубиксем кăларса хурать, ачасене вĕсене пысăкăшне кура танлаштарма ыйтать.

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, атьăр кермен купалар, эпĕ пысăк кубиксемпе ĕçлĕп, эсир вара пĕчĕк кубиксенчен кермен купалăр.

Воспитатель кавир çинче пысăк кубиксенчен, ачасем пĕчĕк кубиксенчен керменсем тăваççĕ. Ĕçсене вĕçлесен пурте пĕрле мĕн тунине пăхаççĕ, пысăк тата пĕчĕк кермен тунине палăртаççĕ.
Маринепе Урине те çуртсене пăхса тухаççĕ, ачасене ырлаççĕ.

П у к а н е с е м. Мĕнле маттур, ачасем, керменсем илемлĕ пулчĕç. Эпир сирĕн пата хăнана кермен купалама татах та килĕпĕр.

Маринепе Урине ачасемпе сыв пуллашаççĕ.

# ЮПА УЙĂХĔНЧЕ ИРТТЕРМЕЛЛИ ВĔРЕНТӰЛЛĔ ВĂЙĂСЕМ

## *1-мĕш вăйă* **Матрёшкăсем вăйă картинче**

***Тĕллевсем:*** *пĕрре, нумай, сахал* сăмахсемпе усă курса япаласен шутне палăртма хăнăхтарасси, ăнлавсене çирĕплетесси.

***Кăтарту хатĕрĕсем***: чăваш тумĕ тăхăннă Анюк пукане, коробка, кашни ача валли пĕрер тата 2 матрёшка.

В ă й ă ю х ă м ĕ

Воспитатель ачасене хăнана килнĕ пуканепе паллаштарать.

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, пирĕн пата хăнана Анюк пукане килнĕ. Анюк матрёшкăсем илсе килнĕ. *(Коробкăра мĕн пуррине кăтартса.)* Ачасем, Анюк мĕн илсе килнĕ?

А ч а с е м. Матрёшкăсем.

В о с п и т а т е л ь. Коробкăра матрёшка нумай-и?

А ч а с е м. Матрёшка нумай.

Воспитатель сассине улăштарса пуканешĕн те калаçать.

П у к а н е. Ачасем, атьăр, матрёшкăсемпе выляр! Эсир кашни пĕрер матрёшка илĕр те «Матрёшка пĕрре», – тесе калăр.

Ачасем черетпе пĕрер матрёшка илеççĕ, «Матрёшка пĕрре», – тесе калаççĕ.

П у к а н е. Матрёшкăсене вăйă картине тăрататпăр, вĕсене ман тавра тăратса тухăр. (*Ачасем матрёшкăсене пукане тавра тăратса тухаççĕ.*) Халĕ матрёшкăсемпе ташлар.

Кĕвĕ çеммипе ачасем пукане йĕри-тавра утаççĕ, матрёшкăсене алла тытса çаврăнаççĕ.

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, миçе пукане пирĕн?

А ч а с е м. Пĕрре.

В о с п и т а т е л ь. Пукане тавра миçе матрёшка тăрса тухнă?

А ч а с е м. Нумай.

В о с п и т а т е л ь. Коробкăра миçе матрёшка юлнă?

А ч а с е м. Сахал.

В о с п и т а т е л ь (*алăпа катартса*). Пукане пĕрре, матрёшка нумай. Пукане йĕри-тавра матрёшка нумай, коробкăра матрёшка сахал.

Ачасем черетпе пӗрре, сахал, нумай япала кӑтартса каласа пыраççӗ.

В о с п и т а т е л ь (*аллинчи пуканене).* Анюк, пирӗн ачасем маттур-и?

П у к а н е. Çапла, садик ачисем питӗ маттур!

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, Анюк килне каясшӑн, атьӑр ӑна кайиччен юрӑпа савӑнтарар.

Воспитатель Э. Табаев çырнӑ «Пукане» юрра юрлать.

В о с п и т а т е л ь.

Парнелерӗ асанне
Мана пӗчӗк пукане.
Çутӑ кӑвак куçлине,
Йӑлтӑр сарӑ çӳçлине.

*Хушса юрламалли:*

Пукане, пукане, эс пӑхатӑн ман çине,
Пукане, пукане, эп пулам саншӑн анне.

*2-мӗш вӑййӑ*

## Мечӗксемпе выляр-и?

***Тӗллевсем:*** *нумай, пӗрре, пӗрре те çук* сӑмахсемпе усӑ курса япаласен шутне палӑртма хӑнӑхтарасси, ӑнлавсене çирӗплетесси.

***Кӑтарту хатӗрӗсем****:* Петрушка, карçинкка, кашни ача валли пӗр пысӑкӑш тата пӗр тӗслӗ мечӗксем.

В ӑ й ӑ ю х ӑ м ӗ

Воспитатель ачасене хӑнана килнӗ Петрушкӑпа паллаштарать. Петрушка мечӗксем тултарнӑ карçинкка илсе килнӗ иккен.

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, курӑр-ха, Петрушка мӗн илсе килчӗ?

А ч а с е м. Мечӗксем.

В о с п и т а т е л ь. Петрушкӑн мечӗкӗсем мӗн тӗслӗ? (*Ачасем мечӗксен тӗсне калаççӗ.*)

В о с п и т а т е л ь. Петрушка миçе мечӗк илсе килнӗ?

А ч а с е м. Нумай.

Петрушка мечӗксене карçинккаран урайне силлет, ачасене кашнине пӗрер мечӗк илме ыйтать.

В о с п и т а т е л ь (*ачасенчен черетпе ыйтать*). Эсӗ миçе мечӗк илтӗн?

А ч а. Пӗрре.

В о с п и т а т е л ь (*юлашки мечĕке илнĕ хыççăн*). Петрушкăн карçинккара миçе мечĕк юлчĕ?

А ч а с е м. Пĕрре те çук.

Воспитатель *пĕрре те çук* ăнлава темиçĕ хут калаттарать.

В о с п и т а т е л ь. Петрушкăн карçинккинче нумай мечĕк пултăр тесен мĕн тумалла?

А ч а с е м. Мечĕксене каялла карçинккана тултармалла.

Ачасем мечĕксене карçинккана каялла хураççĕ.
Воспитатель ачасенчен «Эсĕ миçе мечĕк хутăн?» – тесе ыйтать. (*Пĕрре.)*

В о с п и т а т е л ь. Халĕ карçинккара миçе мечĕк?

А ч а с е м. Нумай.

В о с п и т а т е л ь (*ачасенчен черетпе ыйтать*). Катя, санăн алăра халĕ миçе мечĕк? Миша, санăн алăра миçе мечĕк?

А ч а с е м. Пĕрре те çук.

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, Петрушка мана хăлхаран: «Мечĕкпе вăйă выляр-ха», – терĕ. Выляма пуçличчен эпĕ сире «Мечĕк» ятлă сăвă вуласа парам.

Воспитатель Раиса Сарпин «Мечĕк» ятлă сăввине вулать.

В о с п и т а т е л ь.

Тăппи-таппи, тап-тап-тап…
Хытăрах мана эс тап!
Çавăрса çĕре пăрах –
Пулăп эп хаваслăрах.

Тăппи-таппи, тап-тап-тап!..
Меллĕрех мана эс çап!
Хĕнесессĕн те мана,
Кӳренместĕп эп сана.

Тăппи-таппи, тап-тап-тап…
Эп сикмешкĕн юратап.
Эх, çитесчĕ пĕлĕте!
Пурнăçласчĕ ĕмĕте!..

Тăппи-таппи, тап-тап-тап…
Тыт мана!
Асту, тарап!..

Воспитатель ачасемпе тĕрлĕ хускану тăвать (мечĕке тапаççĕ, хăваласа çитеççĕ, сиктереççĕ, кустараççĕ). Унтан мечĕксене карçинккана пуçтараççĕ.
Воспитатель тепĕр вăйă ирттерет – карçинккари мечĕксене (вĕсен шучĕ ачасенчен 1 чухлĕ сахалрах пулмалла) пăрахса парать, кашни ачан пĕрер мечĕк хăваласа тытмалла. Кам мечĕксĕр юлать – вăйăран тухса ӳкет. Вăйăа темиçе хутчен выляççĕ.
Вăйă вĕçĕнче Петрушкăпа сывпуллашаççĕ, ăна татах хăнана килме чĕнеççĕ.

### *3-мĕш вăйă* Анюк пуканен парнисем

***Тĕллевсем:*** *Миçе? Мĕн чухлĕ?* ыйтусем çине хуравлама вĕрентесси. Япаласен шутне *нумай, пĕрре, пĕрре те çук* сăмахсемпе усă курса палăртма хăнăхтарасси. *Çаврашкапа* паллаштарасси; унăн калăпне тытса пăхса тĕпчеме вĕрентесси.

***Кăтарту хатĕрĕсем:*** пукане, карçинкка, хытă хутран тунă кустăрмасăр автобус, ывăс, виткĕч, шыв тултарнă савăт, пĕр пысăкăш тата пĕр тĕслĕ çаврашкасем, кăвакалсем.

В ă й ă ю х ă м ĕ

Воспитатель ачасем патне хăнана Анюк пукане пĕр карçинкка парне илсе килни çинчен пĕлтерет. Вăл карçинккаран çаврашка кăларать те ачасене кăтартать.

В о с п и т а т е л ь. Ку çаврашка (ăна аллипе йĕри-тавра çавăрса кăтартать).

Унтан ачасенчен ыйтать.

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, ку мĕн? Анюк астуса юлмарĕ.
А ч а с е м. Çаврашка.

Темиçе хут калаççĕ. Хăш-пĕр ачана çаврашкана йĕри-тавра аллипе çавăрса пăхма сĕнет. Воспитатель ачасене Анюк карçинккинчен пĕрер çаврашка илме калать.

В о с п и т а т е л ь. Çак фигурăсен форми мĕнле?
А ч а с е м. Çаврака.
В о с п и т а т е л ь. Çаврашка мĕн тĕслĕ? (*Ачасем тĕсне кура хуравлаççĕ.*)

Ачасем воспитатель ыйтнипе çаврашкасене алăпа йĕри-тавра çавăрса пăхаççĕ, кустарма пулнине калаççĕ.
Воспитатель Анюк карçинккинчен автобус кăларать.

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, курăр-ха, карçинккара мĕн пур? Çак автобуспа ларса кайма пулать-и?
А ч а с е м. Çук.
В о с п и т а т е л ь. Мĕншĕн?
А ч а с е м. Мĕншĕн тесен унăн кустăрмисем çук.
В о с п и т а т е л ь. Кустăрми вырăнне мĕн лартма пулать?

А ч а с е м. Ҫаврашка.

Кусӑрма вырӑнне ҫаврашка лартса пӑхаҫҫӗ.
Воспитатель ачасене шыв хӗрне кӑвакалсене апат ҫитерме каясси ҫинчен пӗлтерет, автобуса ҫула тухма хатӗрлеме ыйтать. Ачасем автобус кустӑрмисене (ҫаврашка) ҫирӗплетсе хураҫҫӗ те кӗвӗ ҫеммипе кӑвакалсене ҫитерме «каяҫҫӗ», Уйӑп Мишшин «Автобус» сӑввине калаҫҫӗ.

А ч а с е м.

Тӳрӗ тикӗс ҫулпала
Пӗр атобус вӗҫтерет.
Хӑйне ирӗк ҫул пама
Таҫтанах вӑл систерет.
Ту-ту-ту! Ту-ту-ту!
Таптанатӑн вӗт, асту!

Сӗтел ҫывӑхне пыраҫҫӗ, воспитатель ывӑс ҫинчи виткӗче сирет.

В о с п и т а т е л ь. Шыв хӗрне ҫитрӗмӗр. Кунта мӗн пур? Кусем мӗнсем?
А ч а с е м. Кӑвакалсем.
В о с п и т а т е л ь. Миҫе кӑвакал-ши кунта?
А ч а с е м. Нумай.

Воспитатель кашни ачана пӗрер тетте илме хушать.

В о с п и т а т е л ь. Сиртен кашни миҫе кӑвакал илчӗ?
А ч а с е м. Пӗрре.
В о с п и т а т е л ь. Ывӑс ҫинче миҫе кӑвакал юлчӗ?
А ч а с е м. Пӗрре те ҫук.

Воспитатель ачасене кӑвакалсем пек выляма сӗнет, хӑй В. Давыдов-Анатри ҫырнӑ «Нарт-нарт кӑвакал» сӑвва вулать, хусканусем туса кӑтартать:

Нарт-нарт кӑвакал
Кӳлӗ тавра ҫаврӑнать,
Ик ҫунатне шарт! ҫапать.

Унтан воспитатель сӗтел ҫине савӑтпа шыв лартать.

В о с п и т а т е л ь. Кӑвакалсем шывра ишме юратаҫҫӗ, ҫак савӑтра нумай кӑвакал пултӑр тесен мӗн тумалла-ши?
А ч а с е м. Кӑвакалсене пурне те шыва ямалла.

Ачасем кӑвакалсене шыва яраҫҫӗ.

В о с п и т а т е л ь. Сиртен кашни миҫе кӑвакал ячӗ?
А ч а с е м. Пӗрре.

В о с п и т а т е л ь. Сирĕн алăра миçе кăвакал юлчĕ?

А ч а с е м. Пĕрре те çук.

В о с п и т а т е л ь. Савăтра халĕ миçе кăвакал?

А ч а с е м. Нумай.

«Çапла, савăтра кăвакал нумай», – тесе çирĕплетет педагог. Унтан воспитательпе ачасем автобуспа киле «таврăнаççĕ», Анюк пуканене вăйă выляттарнăшăн тав тăваççĕ. Анюк пукане ачасемпе сывпуллашать.

*4-мĕш вăйă.*

## Пахча çимĕç пуçтаратпăр

***Тĕллевсем:*** *Миçе? Мĕн чухлĕ?* ыйтусем çине хуравлама вĕрентесси. Япаласен шутне *нумай, пĕрре, пĕрре те çук* сăмахсемпе усă курса палăртма хăнăхтарасси. *Çаврашкана* уйăрасси, вăл *пысăк е пĕчĕк* пулнине палăртасси.

***Кăтарту хатĕрĕсем:*** тиев машини, пĕчĕк хутаç, пĕр тĕслĕ пысăк тата пĕчĕк çаврашкасем, тĕрлĕ пахча çимĕç (кашни ача валли), тăм (е пластилин), тăмпа (пластилинпа) ĕçлемелли ывăс, салфеткăсем.

В ă й ă  ю х ă м ĕ

Кавир çинче – «пахча». Воспитатель ачасене «пахчара» мĕн ӳснине калама ыйтать.

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, ку мĕн?

А ч а. Ку кишĕр.

В о с п и т а т е л ь. Ку мĕнле çимĕç-ши?

А ч а. Ку кăшман.

Ачасем «пахчари» çимĕçсене каласа тухаççĕ.
Воспитатель пĕтĕмлетсе мĕнле каламаллине ăнлантарать.

В о с п и т а т е л ь. Ку çимĕçсене пурне те пĕрле «пахча çимĕç» теççĕ. Атьăр-ха пурте пĕрле тепре калар.

А ч а с е м. Пахча çимĕç.

Ачасем темиçе хут калаççĕ, астуса юлма тăрăшаççĕ.

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, калăр-ха, пахчара мĕн чухлĕ çимĕç çитĕннĕ-ши?

А ч а с е м. Нумай.

Воспитатель тиев машини туртса кĕрет, ачасене пахча çимĕçе машина çине тиеме ыйтать. Ачасем пĕрер çимĕç илеççĕ.

В о с п и т а т е л ь. Эсĕ мĕнле çимĕç илтĕн?

А ч а. Çĕр улми (кишĕр, кăшман, çарăк).

В о с п и т а т е л ь. Эсӗ миҫе ҫимӗҫ илтӗн?

А ч а. Пӗрре.

Ачасем ҫимӗҫе машина ҫине хунӑ май каласа пыраҫҫӗ:
«Эпӗ пӗр кишӗр (ҫӗр улми, ҫарӑк…) хутӑм».

В о с п и т а т е л ь. Машина кузовӗнче пахча ҫимӗҫ нумайлансах пырать. Кузовра мӗн чухлӗ пахча ҫимӗҫ?

А ч а с е м. Кузовра пахча ҫимӗҫ нумай.

В о с п и т а т е л ь. Пахчара мӗн чухлӗ ҫимӗҫ юлчӗ?

А ч а с е м. Пӗрре те ҫук.

Пахча ҫимӗҫ тултарнӑ машина ҫинче ачасем воспитательпе пӗрле «асамлӑ хутаҫ» тупаҫҫӗ.

В о с п и т а т е л ь. «Асамлӑ хутаҫра» тем пур. Мӗн-ши ку?

Хутаҫран ҫаврашка туртса кӑлараҫҫӗ, унӑн ятне тата вӑл мӗн тӗслӗ пулнине калаҫҫӗ. Воспитатель ҫаврашкана фленелеграф ҫине ҫирӗплетсе хурать те пӗр ачине ӑна алӑпа йӗри-тавра ҫавӑрса пӑхма ыйтать. Ҫавӑн пекех ытти ҫаврашкасемпе ӗҫлеҫҫӗ. Ун хыҫҫӑн воспитатель ачасемпе ҫаврашкасем мӗнпе уйрӑлса тӑнине палӑртать, пысӑк, пӗчӗк ӑнлавсемпе ӗҫлет.

В о с п и т а т е л ь. Пуҫтарнӑ пахча ҫимӗҫрен хӑшӗсем ҫаврашка евӗрлӗ?

А ч а с е м. Ҫӗр улми, ҫарӑк, редис.

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, атьр-ха эпир те хамӑр алӑпа ҫаврашка хатӗрлер. Пирӗн тӑм (пластилин) пур. Малтан пысӑк ҫаврашка хатӗрлетпӗр, унтан – пӗчӗкки.

Ачасем тӑмран (е пластилинран) пысӑк тата пӗчӗк ҫаврашкасем (икерчӗсем) тӑваҫҫӗ.

В о с п и т а т е л ь. Халӗ пысӑк ҫаврашкасене пысӑк ҫаврашка ҫине, пӗчӗккисене – пӗчӗкки ҫине хуратпӑр. Юпасем пулчӗҫ. Хӑш юпи пысӑк, хӑш юпи пӗчӗккӗ?

Ачасем кӑтартаҫҫӗ.
Воспитатель ачасене мухтать.

# ЧӐК УЙӐХĔНЧЕ ИРТТЕРМЕЛЛИ ВĔРЕНТӐЛЛĔ ВӐЙӐСЕМ

## *1-мĕш вӑйӑ*

## Мечĕкпе выляр-и?

***Тĕллевсем:*** япалана вăрăмăшне кура танлаштарасси, *вăрăм – кĕске, вăрăмрах – кĕскерех* сăмахсене пуплеве кĕртесси; *нумай, пĕрре, пĕрре те çук* ăнлавсемпе ĕçлесси.

***Кăтарту хатĕрĕсем:*** хутран тунă пĕр тĕслĕ, тĕрлĕ вăрăмăшлă «çулсем», пысăк тата пĕчĕк мечĕк тултарнă икĕ карçинкка.

В ă й ă ю х ă м ĕ

Заняти спортзалта иртет.
Урайĕнче хутран тунă пĕр тĕслĕ, тĕрлĕ вăрăмăшлă «çулсем».
Воспитатель ачасене çулсен тăршшĕне вĕсене пĕр-пĕрин çине хурса е пĕр-пĕрин çумне хурса танлаштарса кăтартать. Унтан ачасене вăрăм (кĕске) çул кăтартать, сăмахпа калаттарать, хăшĕ вăрăмрах (кĕскерех) пулнине палăртать, вăрăм (кĕске) çул тăрăх утса тухма сĕнет. Хăнăхтарусене темиçе хут пурнăçлаççĕ.
Воспитатель ачасене пысăк мечĕксем тултарнă карçинкка кăтартать.

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, карçинккара мĕн пур?

А ч а с е м. Карçинккара мечĕксем пур.

В о с п и т а т е л ь. Мечĕксем мĕнле?

А ч а с е м. Мечĕксем пысăк.

В о с п и т а т е л ь. Пысăк мечĕк мĕн чухлĕ?

А ч а с е м. Нумай.

В о с п и т а т е л ь. Кашни пĕрер пысăк мечĕк илĕр. Аня, миçе мечĕк илтĕн? Катя, миçе мечĕк илтĕн? (*Кашни ачаран ыйтса тухать.*)

А ч а с е м. Пĕрре.

В о с п и т а т е л ь. Карçинккара миçе пысăк мечĕк юлчĕ?

А ч а с е м. Пĕрре те çук.

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, атьăр мечĕксене вăрăм çулпа кустарар.

Ачасем мечĕксене вăрăм çулпа кустараççĕ.

В о с п и т а т е л ь. Карçинккара каллех мечĕк нумай пултăр тесен мĕн тумалла?

А ч а с е м. Пысăк мечĕксене каялла ямалла.

Ачасем мечӗксене карҫинккана хураҫҫӗ. Воспитатель карҫинккана миҫе мечӗк хунине тата унта миҫе мечӗк пулса тӑнине ыйтса пӗлет.
Ҫакӑн евӗрлӗ ӗҫсем ачасем пӗчӗк мечӗксемпе туса ирттереҫҫӗ. Вӗсене ачасем кӗске ҫулпа кустараҫҫӗ:

В о с п и т а т е л ь. Пӗчӗк мечӗк миҫе?
А ч а с е м. Нумай.
В о с п и т а т е л ь. Пысӑк мечӗк миҫе?
А ч а с е м. Нумай.
В о с п и т а т е л ь. Пысӑк тата пӗчӗк мечӗксем пӗрле миҫе?
А ч а с е м. Тата нумайрах, питӗ нумай.

Воспитатель «Мечӗке хӑваласа тыт» хускану вӑййи ирттерет.
Воспитатель карҫинккаран мечӗксене силлет те ачасене пӗрер мечӗк хӑваласа тытма сӗнет.

В о с п и т а т е л ь. Миша, эсӗ миҫе мечӗк хӑваласа тытрӑн?
А ч а. Пӗрре.

Пуҫтарнӑ мечӗксене ачасем каялла карҫинккана яраҫҫӗ.

В о с п и т а т е л ь. Коля, эсӗ карҫинккана миҫе мечӗк хутӑн?
А ч а. Пӗрре.
В о с п и т а т е л ь. Карҫинккара миҫе мечӗк пулса тӑчӗ?
А ч а с е м. Нумай.

Вӑййа темиҫе хутчен выляҫҫӗ.

### *2-мӗш вӑйӑ*

## Тетте лавккинче

***Тӗллевсем:*** *Миҫе? Мӗн чухлӗ?* ыйтусем ҫине хуравлама вӗрентесси. Япаласен шутне *нумай, пӗрре* сӑмахсемпе усӑ курса палӑртасси, япалан вӑрӑмӑшне *вӑрӑм – кӗске, вӑрӑмрах – кӗскерех* ӑнлавсемпе палӑртасси.

***Кӑтарту хатӗрӗсем:*** теттесене тӑватӑ-пилӗк ушкӑна пайласа лартнӑ; тӗрлӗ пысӑкӑш 2 коробка, пӗр тӗслӗ тӗрлӗ вӑрӑмӑшлӑ 2 хӑю (кашни ача валли тата иккӗ).

В ӑ й ӑ ю х ӑ м ӗ

Воспитатель ачасене тетте лавккине кайса курма сӗнет. Сӗтелсем тата пукансем ҫинче теттесене вырнаҫтарнӑ: пӗрерӗн тата ушкӑнласа. Ачасем воспитательпе пӗрле япаласене пӑхса тухаҫҫӗ. Унтан лавккара мӗнле тетте сутнине тата вӗсем мӗн чухлӗ пулнине (пӗрре – нумай) калаҫҫӗ.
Воспитатель сӗннӗ хыҫҫӑн ачасем пӗрре е нумай тетте «сутӑн илеҫҫӗ».

В о с п и т а т е л ь. Эсӗ мӗнле тетте туянтӑн? (*Ачасем хуравлаççӗ.*)

В о с п и т а т е л ь. Эсӗ миçе тетте туянтӑн? (*Ачасем хуравлаççӗ.*)

В о с п и т а т е л ь. Теттесене парнелес тесен вӗсене коробкӑна хурса хитре хӑюсемпе çыхмалла. Ак кунта коробкисем те пур. Коробкӑсем мӗнле? (*Пысӑк, пӗчӗк.*) Пысӑк (пӗчӗк) коробка кӑтартӑр. Хӑш коробки теприн ӑшӗнче пытанма пултарать? (*Танлаштараççӗ – пӗчӗк коробка пысӑкки ӑшне вырнаçать.*)

Воспитатель ачасене коробкӑсем валли хӑюсем суйлама сӗнет.
Воспитатель хӑюсене танлаштарса пӑхма ыйтать.

В о с п и т а т е л ь. Хӑюсен вӑрӑмӑшӗ пӗр пек-и? (*Вӑрӑм, кӗске.*) Çакна мӗнле пӗлме пулать? Хӑюсене мӗнле танлаштарса пӑхма пулать?

Хӑюсене пӗр-пӗрин çине е юнашар хурса пӑхаççӗ.
Пӗтӗмлетӗве *вӑрӑм – кӗске, вӑрӑмрах – кӗскерех* сӑмахсемпе палӑртаççӗ.
Ачасем хӑюсемпе коробкӑсене ушкӑнлаççӗ: вӑрӑммипе пысӑккине,
кӗскипе пӗчӗккине. Воспитатель ачасемпе пӗрле пысӑк (пӗчӗк) коробкӑна
хӑш хӑюпа çыхма май пуррине тишкерет. Хӑюсемпе коробкӑсене çыхса пӑхать.

### *3-мӗш вӑйӑ*

## Посылкӑра мӗн пур?

***Тӗллевсем:*** япала *пӗрре* е *нумай* пулнине уйӑрас хӑнӑхусене çирӗплетесси. *Тӑваткалпа* паллаштарасси, çаврашкапа тӑваткала уйӑрма вӗрентесси.

***Кӑтарту хатӗрӗсем:*** теттесем (машинӑсем, матрӗшкӑсем, пирамидка, мечӗк, кубиксем) тултарнӑ посылка; пӗр тӗслӗ пысӑк тӑваткалпа çаврашка (тӑваткал енӗ тата çаврашка диаметрӗ – 14 см), пӗр тӗслӗ пӗчӗк çаврашкасемпе тӑваткалсем (тӑваткал енӗ тата çаврашка диаметрӗ – 8 см).

### В ӑ й ӑ ю х ӑ м ӗ

Воспитатель ачасене почтальон посылка илсе килни çинчен пӗлтерет, посылкӑра
мӗн пуррине пӑхма сӗнет. Вӑл посылкӑран черетпе теттесем кӑларать, ачасене
теттесен ятне калама ыйтать, япаласен шучӗ миçе пулнине тӗпчет.

В о с п и т а т е л ь. Миçе пирамидка ярса панӑ? Посылкӑра миçе машина (матрӗшка, мечӗк)? Хӑш теттесене нумай ярса панӑ? Мӗнле теттесем пӗрре çеç?

Воспитатель коробкӑран çаврашка кӑларать те фланелеграф
çине çирӗплетсе хурать.

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, ку мӗнле фигура?

А ч а с е м. Ку çаврашка.

В о с п и т а т е л ь. Çаврашка мӗн тӗслӗ?

Ачасем тĕсе палартаççĕ, алăпа йĕри-тавра çавăрса пăхаççĕ.
Воспитатель тăваткала илет те çаврашкапа юнашар фланелеграф çине
çирĕплетсе хурать.

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, ку тăваткал, унăн енĕсем, кĕтесĕсем пур (*кăтартать*).

В о с п и т а т е л ь. Тăваткалăн мĕн пур?

А ч а с е м. Енĕсем, кĕтесĕсем.

В о с п и т а т е л ь. Тăваткал кусать-и? Çавăрса пăхар-ха.

А ч а с е м. Тăваткал кусмасть.

В о с п и т а т е л ь. Çапла, тăваткал кусмасть, çак кĕтессем ăна кустармаççĕ.

Воспитатель кашни ачаран тăваткала йĕри-тавра алăпа тытса
çавăрса пăхма, унăн енĕсене (кĕтесĕсене) кăтартма ыйтать.

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, почтальон интереслĕ япаласем илсе килнĕ-и?

В о с п и т а т е л ь. Çаврашкасем мĕне аса илтереççĕ?

А ч а с е м. Мечĕке, шара.

В о с п и т а т е л ь. Тăваткалсем мĕне аса илтереççĕ?

А ч а с е м. Кубике.

В о с п и т а т е л ь. Эпĕ сире тупмалли юмах калатăп, эсир тупсăмне пĕлĕр:

– Енĕсем ун пит нумай, пур енчен те тăваткал (аллинчи кубике çавăрса катартать). Мĕн-ши ку?

А ч а с е м. Ку кубик.

В о с п и т а т е л ь. Чăнах та, ку – кубик. Унăн енĕсем тăваткал, ку енче те тăваткал, ку енче те… Ак кунта кĕтес пур, тата кĕтес…

В о с п и т а т е л ь. Тепĕр тупмалли юмах калатăп, эсир тупсăмне пĕлĕр:

– Хăй çаврака, кускалать, ача-пăча ăна тапать. (*Аллинчи мечĕке çавăрса кăтартать.*) Мĕн-ши ку?

А ч а с е м. Ку мечĕк.

В о с п и т а т е л ь. Мĕнле маттурсем эсир, ачасем, веçех пĕлтĕр! Сĕтел çинче тата мĕн пур-ши?

Ачасен умĕнчи сĕтелсем çинче çаврашкасем тата тăваткалсем выртаççĕ.
Воспитатель ачасене çаврашка илме, унăн ятне калама тата ăна алăпа йĕри-тавра
çавăрса пăхма ыйтать. Çавăн пек хăнăхусем тăваткалпа та туса пăхаççĕ.
Çакăн хыççăн воспитатель ачасене сĕтел тăрăх малтан шара кустарса пăхма ыйтать,
унтан тăваткала.

В о с п и т а т е л ь. Тăваткала кустарма пулать-и?

А ч а с е м. Çук.

В о с п и т а т е л ь. Ăна кустарма мĕн чăрмантарать?

А ч а с е м. Кĕтесĕсем.

Вăййа вĕçленĕ май воспитатель ачасемпе пĕрле теттесене коробкăна пуçтарать, мĕн пуçтарнине сăмахпа калаттарса пырать: «Ак кубике пуçтартăмăр» тата ыт. те.

*4-мĕш вăйă*

## Çул çӳреве тухар-и?

***Тĕллевсем:*** япала *пĕрре е нумай* пулнине уйăрас хăнăхусене çирĕплетесси. *Тăваткал* фигурăпа малалла паллаштарасси, çаврашкапа тăваткала уйăрттарасси.

***Кăтарту хатĕрĕсем:*** вылямалли кĕтес (пуканесем, пукансем, сĕтел, чашăк-тирĕк, упа çури, чейник тата ыт. те), çут çанталăк кĕтесĕ (ӳсен-тăран, лейка, аквариум тата ыт. те), кĕнекесен кĕтесĕ (кĕнекесем, ӳкерчĕксем, çӳлĕксем тата ыт. те), гараж (темиçе пĕчĕк машина тата пĕр пысăк машина); пăравус силуэчĕ, тĕрлĕ тĕслĕ хутсем (вакунсем), пĕр тĕслĕ çаврашкасемпе тăваткалсем (тăваткал енĕ тата çаврашка диаметрĕ – 8 см).

В ă й ă   ю х ă м ĕ

Валерий Дмитриев юрлакан «Шофĕр юрри» янăрать (интернетра тупма пулать). Ачасем «çул çӳреве» тухаççĕ. Пĕрремĕш чарăну – вылямалли кĕтес.

В о с п и т а т е л ь. Вылямалли кĕтесре мĕн пур? (*Ачасем каласа тухаççĕ.*) Мĕнле теттесем нумай? Хăш тетте пĕрре çеç?

Ун хыççăн ачасем кĕнеке кĕтесĕнче, çут çанталăк кĕтесĕнче, гараж патĕнче чарăнусем тăваççĕ. Унта та çавăн евĕрлех ыйтусем çине хуравлаççĕ. Тепĕр чарăну – сĕтел умĕнче. Сĕтел çинче – çаврашкасемпе тăваткалсем. Воспитатель ачасене çаврашкасем тупма ыйтать.

В о с п и т а т е л ь. Çаврашкасем мĕн тĕслĕ?

В о с п и т а т е л ь. Вĕсемпе мĕн тума пулать? (*Кустарма.*)

Унтан ачасем тăваткал тупаççĕ, фигура ятне калаççĕ, вĕсене кустарса пăхаççĕ. Воспитатель тăваткалсене кустарма кĕтесĕсем кансĕрленине аса илтерет, кĕтессене кăтартма ыйтать. Воспитатель пăравус силуэтне кăтартать. Вагонсем чӳречесĕр пулнине пĕлтерет. «Тата мĕн çитмест-ши?» – тесе ыйтать. Кустăрмисем çуккине палăртса хăварать. Ачасем пуйăса «тӳрлетеççĕ», хăйсем мĕн тунине ăнлантарса пыраççĕ: кустăрма вырăнне çаврашкасем хураççĕ, чӳрече вырăнне – тăваткалсем.

В о с п и т а т е л ь. Ачасем курăр мĕнле хитре пăравус пулса тăчĕ. Ку станцира тăрăшса ĕçлерĕмĕр. Халĕ вара çул çӳреве вĕçлетпĕр, каялла группăна таврăнатпăр.

# РАШТАВ УЙĂХĔНЧЕ ИРТТЕРМЕЛЛИ ВĔРЕНТӰЛЛĔ ВĂЙĂСЕМ

*1-мĕш вăйă*

## Йăвапа пĕрле вылятпăр

***Тĕллевсем:*** япалан вăрăмăшне *вăрăм – кĕске, вăрăмрах – кĕскерех, тăршшĕсем пĕр пек* ăнлавсемпе палăртасси. Япала *пĕрре е нумай* пулнине уйăрас хăнăхусене çирĕплетесси.

***Кăтарту хатĕрĕсем*:** физкультура пӳлĕмĕнчи хатĕрсем, тĕрлĕ тĕслĕ те тĕрлĕ вăрăмăш 2 кантра (вĕрен), вĕсемпе пысăк тата пĕчĕк çăмхасене чĕркесе хунă, Йăва.

В ă й ă  ю х ă м ĕ

Воспитатель ачасене хăнана Йăва килнине пĕлтерет. Йăва пушă алăпа килмен иккен.

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, Йăва мĕн илсе килнĕ? (*2 çăмха кăтартать.*) Çăмхасем мĕн тĕслĕ? Çăмхасен пысăкăшĕ мĕнле?

Йăва ачасене çăмхасем хыççăн кайма чĕнет. Пысăк çăмхапа ачасем физкультура пӳлĕмне лекеççĕ. Воспитатель ачасене ыйтусем парать.

В о с п и т а т е л ь. Кунта мĕнле япаласем нумай? Мĕнле япаласем пĕрер? Ачасем пурте пĕрле мĕнле выляма пултараççĕ? Йăва пĕччен мĕнле выляма пултарать?

Пĕчĕк çăмхапа ачасем выляв пӳлĕмне (е урăх вырăна – воспитатель хăй суйлать) лекеççĕ, çавăн евĕрлĕ ыйтусем çинех хуравлаççĕ.

Воспитатель ачасене çăмхасене сӳтсе пăхма сĕнет, вăрăмăшне кура танлаштарма ыйтать:

В о с п и т а т е л ь. Вăрăм кантрана тупса кăтартăр. Кĕске кантрана тупса кăтартăр. Кăвак кантрапа танлаштарсан хĕрлĕ кантра тăршшĕ çинчен мĕн калама пулать? Хĕрлĕ кантрапа танлаштарсан кăвак кантра тăршшĕ çинчен мĕн калама пулать?

Воспитатель ачасен хуравĕсене пĕтĕмлетет, вăрăм кантраран пысăк çăмха, кĕске кантраран пĕчĕк çăмха чĕркеме пулнине палăртать.

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, атьăр Йăвапа пĕрле «Карусельсем» вăйă выляр.

Ачасем кантрасенчен тытаççĕ те икĕ «карусель» тăваççĕ: пысăкки тата пĕчĕкки.
«Карусельсем» кĕвĕ çеммипе çаврăнаççĕ. Йăва малтан пысăк «карусельпе»,
унтан пĕчĕккипе «ярăнать». Вăйă пĕтсен ачасем Йăвапа сывпуллашаççĕ.

## *2-мĕш вăйă*
## Мăркка кушак хăнара

***Тĕллевсем:*** япалан вăрăмăшне *вăрăм – кĕске, вăрăмрах – кĕскерех, тăршшĕсем пĕр пек* ăнлавсемпе палăртасси. Япала *пĕрре* е *нумай* пулнине уйăрас хăнăхусене çирĕплетесси. Çаврашкапа тăваткала уйăрасси, ячĕсене калама пĕлнине çирĕплетесси.

***Кăтарту хатĕрĕсем**:* пĕр тĕслĕ çаврашка (диаметрĕ – 14 см), тăваткал (енĕн тăршшĕ – 14 см); кушак (тетте), кăранташсем валли пысăк тата пĕчĕк стакансем, геометри фигурисем валли ывăс.

***Валеçсе памалли хатĕрсем:*** тĕрлĕ тĕслĕ кăранташсем (тăршшĕ – 10 см тата 20 см); çаврашкасем (диаметрĕ – 7-8 см), тăваткалсем (енĕсен тăршшĕ – 7-8 см).

В ă й ă   ю х ă м ĕ

Воспитатель пӳлĕме кушак илсе кĕрет те ăна чӳрече янаххи çине лартать.
Хăй Уйăп Мишшин «Хĕл çитрĕ» сăввине вулать.

В о с п и т а т е л ь.

Шурĕ юрĕ çурĕ, çурĕ,
Таврана шап-шурă турĕ.
Çунасем юр çийĕн шурĕç,
Килчĕ çитрĕ Хĕл мучи!

Ачасем, эсир урамра мĕн куратăр? Урамра мĕнле япала нумай? Мĕнсем пĕрер?
Ачасем воспитательпе пĕрле чӳречерен пăхаççĕ, унăн ыйтăвĕсем çине хуравлаççĕ.

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, Мăркка кушак эсир маттуррине пĕлет. Сире валли вăл симĕс тата сарă кăранташсем илсе килнĕ, вĕсен вăрăмăшне танлаштарма ыйтать.

Воспитатель ачасене симĕс тата сарă кăранташсем илме сĕнет, вĕсен вăрамăшне танлаштарма ыйтать. Япаласене танлаштармалли мелсене тĕрĕслет
(пĕр-пĕрин çине е юнашар хурса), кăранташ кĕске е вăрăм пулнине кăтартса
калама ыйтать.

В о с п и т а т е л ь. Симĕс кăранташ пирки мĕн калама пулать? Сарă кăранташ мĕнле – вăрăм-и е кĕске? Кăранташсене стакансем ăшне хурăр: вăрăм кăранташсене пысăк стакана, кĕскисене – пĕчĕк стакана.

В о с п и т а т е л ь.  Ачасем, Мăркка кушак тата тем илсе килнĕ. Пăхса илер-ха. Мĕн-ши кунта? Ку фигурăсем мĕн ятлă?

Ачасем ывăс çинчен пĕрер геометри фигури (çаврашка, тăваткал) илеççĕ, вĕсен ятне калаççĕ.

В о с п и т а т е л ь.  Ачасем, халĕ Мăркка кушак сирĕнпе пĕрле «Хăвăн çуртна туп» вайă вылясшăн.

Кавир çинче хутран каснă çаврашкапа тăваткал выртаççĕ. Ачасен аллинче пĕрер геометри фигури. Кĕвĕ çеммипе ачасем куçса çӳреççĕ. Кĕвĕ чарăнсан ачасен хăйсен «çуртне» тупмалла: камăн аллинче çаврашка – çаврашка патне чупаççĕ, камăн тăваткал – тăваткал патне. Ачасем хăйсен вырăнне тупсан, воспитатель вĕсенчен мĕншĕн çак вырăна суйланине ыйтать. Кушак ачасене мухтать. Заняти вĕçĕнче пурте пĕрле кушака юрă юрласа параççĕ.

*3-мĕш вăйă*

## Хĕл çитсен

***Тĕллевсем:*** япала шутне танлаштарасси (япаласене пĕр-пĕрин çине хурса), *нумай, пĕр тан* ăнлавсемпе усă курма вĕрентесси. Сылтăмпа сулахай енсене уйăрма хăнăхтарасси.

***Кăтарту хатĕрĕсем:*** юр кĕлетки, 4-шар пĕчĕк витре, пĕчĕк савук, пуçĕсене витре тăхăнтартман 3-4 юр кĕлетке (карточкăсем), 3-4 пĕчĕк витре (карточкăсем), сылтăмпа сулахай алсиш ӳкерчĕкĕсем.

В а й ă  ю х ă м ĕ

В о с п и т а т е л ь.  Ачасем, пирĕн пата хăнана Юр кĕлетке парнесем илсе килчĕ (пĕчĕк витресем тата пĕчĕк савуксем кăтартать, ячĕсене калаттарать). Атьăр витресене йĕркипе вырнаçтарар.

Ачасем витресене лартса тухаççĕ. Воспитатель вĕсен ĕçĕсене çакăн пек сăмахсемпе ăнлантарса пырать: «Пĕр витре, тепĕр витре....»

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, миçе витре лартрăмăр?

А ч а с е м. Нумай.

В о с п и т а т е л ь. Тĕрĕс, нумай. Халĕ кашни витрене пĕрер савук хурса тухатпăр.

Пĕр ачана чĕнсе илет. Ача хăй мĕн тунине ăнлантарса пырса савуксене витрене хурса тухать.

В о с п и т а т е л ь.  Миша, эсĕ миçе савук хутăн?

А ч а.  Нумай.

В о с п и т а т е л ь. Кашни витрере савук пур-и?

А ч а с е м. Пур.

В о с п и т а т е л ь. Витрепе савук пирĕн мĕн чухлĕ?

А ч а с е м. Нумай.

В о с п и т а т е л ь. Тĕрĕс, нумай. Витрепе савуксен шучĕ пĕр пек, пĕр тан.

Ачасем воспитательпе пĕрле юр кĕлетке ӳкернĕ карточкăсене пăхма тытăнаççĕ.

В о с п и т а т е л ь. Карточкăра мĕн ӳкернĕ?

А ч а с е м. Юр кĕлетки!

В о с п и т а т е л ь. Миçе юр кĕлетки?

А ч а с е м. Нумай.

В о с п и т а т е л ь. Юр кĕлеткисем çинче мĕн çитмест?

А ч а с е м. Витре.

Воспитатель ачасене япаласене мĕнле вырнаçтармаллине ăнлантарса пырать.

В о с п и т а т е л ь. Атьăр кашни юр кĕлеткене витре тăхăнтартар.

Ачасем юр кĕлеткесен пӳçĕсем çине витресем тăхăнтартаççĕ.

В о с п и т а т е л ь. Пирĕн мĕн чухлĕ витре?

А ч а с е м. Нумай.

В о с п и т а т е л ь. Кашни юр кĕлеткен витре пур-и?

А ч а с е м. Пур.

В о с п и т а т е л ь. Юр кĕлетке шучĕ пирки мĕн калама пулать?

А ч а с е м. Юр кĕлетке нумай.

В о с п и т а т е л ь. Витре шучĕ çинчен мĕн калама пулать?

А ч а с е м. Витре нумай.

В о с п и т а т е л ь. Юр кĕлетке тата витре шучĕ çинчен мĕн калама пулать?

А ч а с е м. Вĕсем нумай.

В о с п и т а т е л ь. Çапла, Юр кĕлетке тата витре нумай. Юр кĕлетке тата витре шучĕ пĕр тан-и?

А ч а с е м. Юр кĕлетке тата витре шучĕ пĕр тан.

В о с п и т а т е л ь. Эппин, Юр кĕлетке тата витре шучĕ пирки урăхла мĕнле калама пулать?

А ч а с е м. Вĕсен шучĕ пĕр тан.

В о с п и т а т е л ь. Çапла, ачасем, кашни юр кĕлеткен витре пур, эппин вĕсен шучĕсем пĕр тан.

Воспитатель ачасемпе хĕлле юр кĕлетки тунă чухне алсишпе ĕçлемеллине калать, вăйă картине йыхăрать. «Çухалнă алсише тупатпăр» вăйă выляççĕ.
Вăйă пуçламăшĕнче воспитатель ачасене сылтăмпа сулахай алăсене кăтартма

ыйтать. Унтан кашни ачана алсиш ӳкерчӗкӗсене валеҫсе парать, анчах пӗр алсишне ҫеҫ парать. Ачасем хӑйсем хӑш алсиш пуррине палӑртаҫҫӗ, тепӗр алли валли алсиш воспитатель сӗтелӗ ҫинчи ӳкерчӗксем хушшинче шыраса тупаҫҫӗ. Тӗрӗс тупнине ачасем ӳкерчӗке хӑйсен аллисем ҫине хурса тӗрӗслеҫҫӗ.

## *4-мӗш вӑйӑ*
## Пуканене пулӑшатпӑр

***Тӗллевсем:*** япала шутне палӑртасси, танлаштарасси, *нумайрах, пӗр тан, мӗн чухлӗ – ҫавӑн чухлӗ* ӑнлавсемпе усӑ курасси. Япаласене пӗр-пӗрин ҫине хурса е юнашар хурса вӗсен вӑрӑмӑшне танлаштарас хӑнӑхусене ҫирӗплетесси, *вӑрӑм – кӗске, вӑрӑмрах – кӗскерех* ӑнлавсемпе ӗҫлесси.

***Кӑтарту хатӗрӗсем:*** пӗр тӗслӗ тӗрлӗ вӑрӑмӑшлӑ 2 шарф, пукане, тӗрлӗ вӑрӑмӑшлӑ туратсем (кашни ача валли 2-шер турат), хытӑ хутран касса кӑларнӑ вӗҫен кайӑксем (кашни ача валли 5-шер кайӑк), кантрасем.

В ӑ й ӑ ю х ӑ м ӗ

Воспитатель ачасене Пукане усӑлса ҫӳреме хатӗрленни ҫинчен пӗлтерет. Пукане валли шарф суйласа илме пулӑшу ыйтать.

В о с п и т а т е л ь. Шарфсем мӗн тӗслӗ? Шарфсем пӗр тӗслӗ-и?

А ч а с е м. Шарфсен тӗсӗсем пӗр пек.

В о с п и т а т е л ь. Шарфсем вӑрӑмӑшӗпе пӗр тан-и е тан мар? Ҫакна пӗлме шарфсене мӗнле хумалла?

А ч а с е м. Шарфсене пӗр-пӗрин ҫине хумалла (е юнашар хумалла).

Воспитатель ачасене шарфсене танлаштарма сӗнет.

В о с п и т а т е л ь. Шарфсен вӑрӑмӑшӗ пирки мӗн калама пулать?

А ч а с е м. Ку шарф вӑрӑм. Ку шарф – кӗске.

В о с п и т а т е л ь. Вӑрӑм шарфне кӑтартӑр-ха. (*Ачасем кӑтартаҫҫӗ.*)

В о с п и т а т е л ь. Халӗ кӗске шарфне кӑтартӑр. (*Ачасем кӑтартаҫҫӗ.*)

Кирлӗ чухне воспитатель ачасене пулӑшать. Ачасем шарф вӑрӑмӑшне кӑтартса аллисемпе шарфа пуҫламӑшӗнчен пуҫласа вӗҫне ҫитиччен тӑснине сӑнаса тӑрать.

В о с п и т а т е л ь. Хӑш шарфне ҫыхса ярӑпӑр пуканене? Вӑраммине-и е кӗскине? (*Ачасем хуравлаҫҫӗ.*)

Воспитатель ачасене ывӑссем ҫинче выртакан туратсене кӑтартать.

В о с п и т а т е л ь. Кусем мӗн?

А ч а с е м. Туратсем.

В о с п и т а т е л ь. Туратсен вӑрӑмӑшӗ пӗр пек-и?

А ч а с е м. Тĕрлĕрен, пĕрисем вăрăм, теприсем – кĕске. (Вăрăмрах-кĕскерех.)

В о с п и т а т е л ь. Танлаштарар-ха вĕсене. (*Ачасем танлаштараççĕ.*) Вăрăм турата кăтартăр-ха. (*Ачасем кăтартаççĕ.*) Халĕ кĕскине кăтартăр. (*Ачасем кăтартаççĕ.*)

Воспитатель Г. Юмартăн «Пирĕн ялта» сăввине вулать.

В о с п и т а т е л ь.

Пирĕн ял йăмраллă,
Йăмрисем йăвallă,
Йăвисем куракла,
Куракĕсем чĕпĕллĕ…

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, Пукане пире кĕске турат çине пĕр кайăк лартма ыйтать.

Ачасем кĕске турат çине пĕр кайăк лартаççĕ.

В о с п и т а т е л ь. Миша, кĕске турат çине миçе кайăк лартрăн? Лена, эсĕ кĕске турат çине миçе кайăк лартрăн?

А ч а с е м. Пĕр кайăк.

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, туратсемпе кайăксем çинчен мĕн калама пулать?

А ч а с е м. Туратсемпе кайăксен шучĕ пĕр тан.

В о с п и т а т е л ь. Эппин кунта *мĕн чухлĕ турат, çавăн чухлĕ кайăк.*

Воспитатель ачасене темиçе хутчен çĕнĕ ăнлавсене калаттарать.

В о с п и т а т е л ь. Халĕ, ачасем, Пукане пире вăрăм турат илме хушать, ун çине нумай кайăк лартма ыйтать.

Ачасем вăрăм турат çине темиçе кайăк лартаççĕ.

В о с п и т а т е л ь. Катя, вăрăм турат çине миçе кайăк лартрăмăр? Витя, эсĕ кала-ха, вăрăм турат çине миçе кайăк лартрăмăр?

А ч а с е м. Нумай.

Воспитатель ачасен хуравĕсене пĕтĕмлетет.

# КĂРЛАЧ УЙĂХĔНЧЕ ИРТТЕРМЕЛЛИ ВĔРЕНТӲЛЛĔ ВĂЙĂСЕМ

*1-мĕш вăйă.*

## Качака путеккисем патне хăнана каятпăр

***Тĕллевсем:*** япаласен сарлакăшне палăртасси, танлаштарасси (икĕ япалана пĕр-пĕрин ҫине хурса е юнашар хурса танлаштарма вĕрентесси); *сарлака – ансăр, сарлакарах – ансăртарах* ăнлавсемпе ĕҫлесси; *нумайрах, пĕр пек, мĕн чухлĕ – ҫавăн чухлĕ* ăнлавсене ҫирĕплетесси.

***Кăтарту хатĕрĕсем:*** тăршшĕпе пĕр пек расна сарлакăшлă ятарласа тунă «сукмак», качака ӳкерчĕкĕ, качака путеккипе купăста пуҫĕн ӳкерчĕкĕсем (кашни ача валли 4-5-шер ӳкерсе хунă картинăсем).

В ă й ă ю х ă м ĕ

Воспитатель кирпĕчсенчен сарлака тата ансăр «сукмак» туса хурать, ачасене качака путеккисем патне хăнана каясси ҫинчен пĕлтерет.

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, паян эпир сирĕнпе качака путеккисем патне хăнана каятпăр. Арҫын ачасем симĕс (сарлака) ҫулпа, хĕр ачасем кăвак (ансăр) ҫулпа утатпăр.

Сукмак тăрăх утнă пек тăваççĕ.

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, сукмаксен вăрăмăшĕ пĕр пек-и?

А ч а с е м. Пĕр пек.

В о с п и т а т е л ь. Сарлакăшĕ пĕр пек-и? (*Ҫук.*) Сукмаксем пирки мĕн калама пулать?

Ачасем сукмаксене танлаштараççĕ.

А ч а с е м. Ку сукмак сарлака, ку сукмак ансăр.

В о с п и т а т е л ь (*алăпа кăтарса*). Ҫапла, сукмаксене сарлака тата ансăр тесе калама пулать.

В о с п и т а т е л ь. Сарлака сукмака кăтартăр-ха, каласа хăварăр. (*Ачасем кăтартаççĕ, калаççĕ.*) Халĕ ансăррине кăтартăр. (*Ачасем кăтартаççĕ, сăмахпа калаççĕ.*)

Ачасем сукмаксене танлаштараççĕ, вĕсенчен пĕри сарлака, тепри ансăр пулнине палăртаççĕ.

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, эпĕ сире «Качака» юрă юрласа паратăп. Эсир вара тимлĕ итлĕр. Качака мĕнле çулпа утать-ши? Ансăр çулпа-и е сарлака çулпа? (*Юрă сыпăкне юрлать.*)

Пиçиххи пек сукмакпа,
Шăкăлт-шăкăлт пушмакпа
Качака килет (*2 хут*)
Турашăл пек сухалне,
Шĕп-шĕвĕркке хӳрине
Вылятса илет. (*2 хут*)

Ачасем сукмак ансăр пулнине палăртаççĕ.
Воспитатель качака ӳкернĕ ӳкерчĕке вырнаçтарать: «Ку – качака», –
тесе паллаштарать. Воспитатель ачасене ыйтусем парать, калаçтарать.

В о с п и т а т е л ь. Качакан миçе качака путекки?

А ч а с е м. Нумай.

В о с п и т а т е л ь. Качака путеккисем валли амăшĕ мĕн илсе килнĕ?

А ч а с е м. Купăста.

В о с п и т а т е л ь. Мĕн чухлĕ купăста илсе килнĕ вăл?

А ч а с е м. Нумай.

Воспитатель кашни качака путеккине купăста валеçсе пама сĕнет.
Качака путекки ӳкерчĕкĕсем çине ачасем купăста ӳкерчĕкĕсене хураççĕ те вĕсен
шутне танлаштараççĕ.

В о с п и т а т е л ь. Купăста кашни качака путеккинех çитрĕ-и? Качака путеккипе купăста мĕн чухлĕ пулни çинчен мĕн калама пулать?

А ч а с е м. Купăстапа качака путеккисен шучĕ пĕр тан.

В о с п и т а т е л ь. Эппин кунта *мĕн чухлĕ* качака*, çавăн чухлĕ* купăста.

Воспитатель ачасене çĕнĕ ăнлавсене темиçе хутчен калаттарать.
Воспитатель пĕтĕмлетсе хăварать, унтан ачасене вăйă выляма чĕнет. «Кашкăрпа качака путеккисем» хускануллă вăйă выляççĕ. Воспитатель вăйă пуçланиччен юмахра миçе кашкăр (*пĕрре*) тата миçе качака путекки (*нумай*) пулни çинчен ыйтса пĕлет.
Вылякансенчен пĕри кашкăр рольне вылять, ытти ачасем качака путеккисем пулаççĕ. Кашкăр качака путеккисене хăваласа хыççăн чупать, вĕсене тытма тăрăшать.
Качака путеккисем кашкăртан тараççĕ, пытанаççĕ.
Вăййа темиçе хутчен выляççĕ.

*2-мĕш вăййă*

## Кукамайăн тутлă икерчи

***Тĕллевсем:*** япаласен сарлакăшне палăртасси, танлаштарасси (икĕ япалана пĕр-пĕрин çине хурса е юнашар хурса танлаштарни); *сарлака – ансăр, сарлакарах – ансăртарах* ăнлавсемпе малалла ĕçлесси; *нумайрах, пĕр пек, çавăн чухлĕ – мĕн чухлĕ* ăнлавсене çирĕплетесси.

Геометри фигурисене (*çаврашка, тăваткал*) уйăрасси, пĕлĕве çирĕплетесси.

***Кăтарту хатĕрĕсем:*** хытă хутран касса тунă икĕ «юхан шыв» (сарлакăшĕсем тĕрлĕрен); çаврака та тăваткал варриллĕ чечексем (кашни ачан пĕрер пĕчĕк чечек, воспитателĕн пĕр пысăк чечек), хытă хутран касса тунă турилккесем тата «икерчĕсем» (кашни ача валли 5-шер икерчĕ), ятарлă танлаштару карточкисем.

В ă й ă  ю х ă м ĕ

Воспитатель заняти пуçламăшĕнче сăвăласа калать, ачасем *пĕрре* сăмаха воспитатель хыççăн каласа пыраççĕ.

В о с п и т а т е л ь.

Кукамай икерч(ĕ) пĕçернĕ,
Çупа сĕрнĕ,
Мăнуксе(не) валеçнĕ...
Дашăна – пĕрре,
Пашăна – пĕрре,
Ваньккӑна – пĕрре,
Таньăна – пĕрре,
Сашăна – пĕрре,
Машăна – пĕрре.
Пирĕн ырă кукамайăн
Икерчисем пит тутлă!

Воспитатель ачасене ыйтусем парса сăвăпа ĕçлеттерет.

В о с п и т а т е л ь. Ачасем нумай-и? Икерчĕ нумай-и? Кашни ачана икерчĕ çитрĕ-и? Ачасемпе икерчĕ шучĕ пĕр тан-и?

Воспитатель ачасене карточкăсем валеçет те кĕсьесене турилкке вырнаçтарма сĕнет (малтан япаласене вырнаçтармалли правилăсене палăртать).

В о с п и т а т е л ь. Аялти кĕсьене турилкке хуратпăр. Мĕн чухлĕ турилкке хутăр эсир?

А ч а с е м. Нумай.

В о с п и т а т е л ь. Кашни турилкке ҫине пĕрер икерчĕ хурар-ха. Ҫӳлти кĕсьесене чикетпĕр. Мĕн чухлĕ икерчĕ хутăр эсир?

А ч а с е м. Нумай.

В о с п и т а т е л ь. Кашни турилкке ҫинче пĕр икерчĕ выртать-и?

А ч а с е м. Пĕрре.

В о с п и т а т е л ь. Турилккесемпе икерчĕсене танлаштарса вĕсен шучĕ мĕн чухлĕ пулни пирки мĕн калама пулать?

А ч а с е м. Вĕсен шучĕ пĕр тан.

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, кукамай икерчи тутлă-и? Кукамая тав туса ун валли чечексем пуҫтарар-и? Анчах та ҫавна тăвас тесен пирĕн юхан шывсем урлă каҫмалла.

Воспитатель урайне хытă хутран тунă икĕ «юхан шыв» сарса хурать, ачасене калаҫтарать.

В о с п и т а т е л ь. Юхан шывсен сарлакăшĕ пĕр пек-и?

А ч а с е м. Ҫук, пĕр пек мар. Тĕрлĕрен.

В о с п и т а т е л ь. Сарлака юхан шыва кăтартăр-ха. (*Ачасем кăтартаҫҫĕ.*) Халĕ ансăррине кăтартăр. (*Ачасем кăтартаҫҫĕ.*)

В о с п и т а т е л ь. Атьăр сарлака юхан шыв урлă каҫар.

Ачасем пысăк утăм тăваҫҫĕ те сарлака юхан шыв урлă каҫса каяҫҫĕ.

В о с п и т а т е л ь. Халĕ ĕнтĕ ансăр юхан шыв урлă каҫатпăр.

Ачасем пĕчĕк утăм тăваҫҫĕ.

В о с п и т а т е л ь. Мĕншĕн эпир малтан пысăк утăм турăмăр, унтан – пĕчĕк?

Воспитатель ачасене *сарлакарах – ансăртарах* сăмахсемпе усă курма хăнăхтарать. Унтан юлташсемпе пĕрле утма та хаваслă пулни пирки калать, П. Ялкирĕн «Савăнăҫ» сăввине вулать.

В о с п и т а т е л ь.

Эс утан,
Эп те утап.
Пускалаҫҫĕ урасем
Тяп-тяп-тяп.

Эс ташлан,
Эп те ташлап.
Ал ҫупаҫҫĕ юлташсем
Шап-шап-шап!

Эс юрлан,
Эп те юрлап.

Иккĕн юрлама аван.
Ай-я-я!

Эс савнан,
Эп те савнап.
Эх, юрлас килет ялан.
Ля-ля-ля!

В о с п и т а т е л ь. Ак уçланкăна çитрĕмĕр те. Мĕн чухлĕ чечек кунта!

Урайне чечексем сарса хунă. Воспитатель ачасене уçланкăри чечексене сăнама ыйтать.

В о с п и т а т е л ь. Чечексем пĕр пек-и? Варри мĕне аса илтерет? (*Çаврашкана, тăваткала.*)

Воспитатель ачасене чечек татма, чечек çыххи тума сĕнет. Унтан варри çаврашкаллă чечек татнă ачасем пĕр ушкăна, тăваткал вариллĕ чечек татнă ачасене тепĕр ушкăна уйăрать. Ачасем воспитательпе пĕрле малтанхи сăвва калаççĕ, хусканусем тăваççĕ.

## *3-мĕш вăйă*

## Мулкачпа пĕрле савăнатпăр

***Тĕллевсем:*** япаласен сарлакăшне палăртасси, танлаштарасси (икĕ япалана пĕр-пĕрин çине хурса е юнашар хурса танлаштарма вĕрентесси); *сарлака – ансăр, сарлакарах – ансăртарах* ăнлавсемпе малалла ĕçлесси; *нумайрах, пĕр пек, çавăн чухлĕ – мĕн чухлĕ* ăнлавсене çирĕплетесси.

Геометри фигурипе (*виç кĕтеслĕх*) паллашасси.

***Кăтарту хатĕрĕсем:*** Мулкач (тетте), çыру, пысăк çаврашка (диаметрĕ 10 см), виç кĕтеслĕх (енĕн тăршшĕ 10 см), хытă хутран касса тунă 2 пĕр вăрăмăшлă «пăрлă» сукмак (пĕрин сарлакăшĕ 30 см, теприн – 15 см), валеçсе пама – çаврашкасем (диаметрĕ 5 см), виç кĕтеслĕхсем (енĕн тăршшĕ 5 см), ятарлă карточкăсем (унта 5-шер тăват кĕтеслĕх – çуртсем – вырнаçтарнă, 5-шер виç кĕтеслĕх – тăрăсем – хурса янă).

В ă й ă   ю х ă м ĕ

Мулкач ачасем валли çыру илсе килнĕ иккен. Çырура геометри фигурисем: çаврашка тата виç кĕтеслĕх. Воспитатель çаврашкана кăларать те ăна фланелеграф çумне çирĕплетет. Ачасене ыйтусем парать.

В о с п и т а т е л ь. Мулкач пире валли мĕн илсе килнĕ-ши?
А ч а с е м. Çаврашка.
В о с п и т а т е л ь. Çаврашка мĕн тĕслĕ? (*Ачасем тĕсне кура хуравлаççĕ.*)

Воспитатель ачасене çаврашкана пӳрнепе йĕри тавра çавăрса пăхма сĕнет.
Унтан виç кĕтеслĕх кăларать те çаврашка çумне хурать:

Воспитатель. Мулкач тата мĕн илсе килнĕ?

Воспитатель. Ку фигура мĕн ятлă пулнине кам пĕлет? Ку виç кĕтеслĕх.

Воспитатель ачасене фигура ятне тепĕр хут калама, хăш-пĕр ачасене унăн кĕтесĕсене кăтартма сĕнет. Кайран воспитатель ачасен хуравĕсемпе ĕçĕсене пĕтĕмлетет.

Воспитатель. Ачасем, атьăр-ха мулкачпа пĕрле «Пĕр пеккине туп» вăйă выляр.

Ачасем умĕнче сĕтел çинче геометри фигурисем – çаврашка тата виç кĕтеслĕх.
Мулкач черетпе фигурăсене кăтартса пырать, ачасем çавăн пеккисене тупаççĕ те фигурăсен ятне калаççĕ.
Унтан воспитатель виç кĕтеслĕх кĕтессисем курăнччăр тесе ун çине çаврашка хума сĕнет. Ачасем виç кĕтеслĕх çаврашкаран мĕнпе уйрăлса тăнине пĕлеççĕ.

Воспитатель. Ачасем, мулкач ывăнчĕ пулас, атьăр пĕрле хускалса илер (хусканусем тăваççĕ):

Мулкач ларать пашкаса
Ик хăлхине вылятса:
Ак çапла, ак çапла
Ик хăлхине вылятса.

Воспитатель. Ачасем, мулкач хăй валли çурт туса лартасшăн. Пăхар-ха мĕн илсе килнĕ вăл.

Воспитатель карточкăсем валеçет.

Воспитатель. Карточка çинче миçе çурт?

Ачасем. Нумай.

Воспитатель. Пӳртсен мĕн çук?

Ачасем. Тăрри çук.

Воспитатель. Çурт тăррине мĕнле тумалла-ши? Мĕнле фигура пире пулăшать-ши?

Ачасем. Виç кĕтеслĕх.

Воспитатель. Кашни пӳрт çине виç кĕтеслĕх хурăр.

Воспитатель. Сирĕн миçе пӳрт тата мĕн чухлĕ пӳрт тăрри пулчĕ?

Ачасем. Нумай.

Воспитатель. Кашни пӳртĕнех тăрри пур-и? Вĕсен шучĕ мĕнле – пĕр пек-и? Çавăн чухлех-и?

Ачасем. Пĕр пек, çавăн чухлех.

Воспитатель. Мулкач килне кайма пуҫтарӑнать. Унӑн пӑрлӑ сукмак урлӑ сиксе каҫмалла.

Урайӗнче – икӗ «пӑрлӑ сукмак». Воспитатель ачасене вӗсен сарлакӑшне танлаштарма, *сарлака (ансӑр)* сукмак кӑтартма сӗнет. Унтан ачасем черетпе сукмак урлӑ сике-сике каҫаҫҫӗ.

Воспитатель. Мулкач хӑш сукмак урлӑ ҫӑмӑллӑн сиксе каҫать? Мӗншӗн?

Воспитатель ачасен хуравӗсене итлет, кирлӗ пулсан тӳрлетет, хыҫҫӑн калаттарать.

Воспитатель. Ачасем, атьӑр мулкача ӑсатса ярар. Сывӑ пул, мулкач! Татах килсе ҫӳре!

## *4-мӗш вӑййӑ*

## Эпир хавас ачасем

***Тӗллевсем:*** япала ушкӑнӗсене танлаштарасси, *нумайрах, пӗр тан, ҫавӑн чухлӗ – мӗн чухлӗ* сӑмах ҫаврӑнӑшӗсемпе усӑ курасси.

Геометри фигурисене (*тӑваткал, виҫ кӗтеслӗх*) уйӑрасси, ӑнлавсене ҫирӗплетесси.

***Кӑтарту хатӗрӗсем:*** грузовик, 5 кубик, 5 матрёшка, ҫаврашка (диаметрӗ 10 см), тӑваткал (енӗн тӑршшӗ 10 см), виҫ кӗтеслӗх (енӗн тӑршшӗ 10 см); пусма картлашки, валеҫсе пама – ятарлӑ карточкӑсем (ҫӳлти кӗсйине матрёшка вырнаҫтарнӑ), хытӑ хутран касса тунӑ ҫӑмха; ҫаврашкасем, тӑваткалсем, виҫ кӗтеслӗхсем (кашни ача валли пӗрер хатӗр).

Вӑйӑ юхӑмӗ

Воспитатель группӑна грузовик илсе кӗрет. Грузовик ҫинче матрёшкӑсем тата кубиксем пур. Воспитатель ачасене ыйтусем парса калаҫтарать.

Воспитатель. Ачасем, пӑхӑр-ха, грузовик кузовӗнче мӗнле теттесем выртаҫҫӗ?

Ачасем. Кубиксем, матрёшкӑсем.

Воспитатель ачасене кубиксене пурне те пусма картлашкисем ҫине вырнаҫтарма сӗнет.

Воспитатель. Эпир мӗн чухлӗ кубик лартрӑмӑр?

Ачасем. Нумай.

Воспитатель. Халӗ ӗнтӗ кашни кубик ҫине пӗрер матрёшка лартатпӑр. Пӗр кубик – пӗр матрёшка.

Воспитатель. Миҫе матрёшка?

А ч а с е м. Нумай.

В о с п и т а т е л ь. Кубиксемпе матрёшкăсен шучĕ мĕн чухлĕ? Пĕр тан-и?

А ч а с е м. Пĕр тан.

В о с п и т а т е л ь. Ачасем пăхăр-ха, матрёшкăсем кубик çинчен «сиксе анчĕç».

Матрёшкине пусма картлашкин аялти картлашки çине хурать те çак сăмахсене калать: «Пĕр кубик – пĕр матрёшка».

В о с п и т а т е л ь. Кашни кубик çумĕнче матрёшка тăрать-и?

А ч а с е м. Тăрать.

В о с п и т а т е л ь. Матрёшкасемпе кубиксен шучĕ пĕр тан-и?

А ч а с е м. Пĕр тан.

В о с п и т а т е л ь. Матрёшкăсем мĕн чухлĕ, кубиксем те çавăн чухлех.

Воспитатель ачасене карточка валеçсе парать. Карточка кĕсйине пĕр матрёшка вырнаçтарнă. Воспитатель ачасенчен миçе матрёшка пулнине ыйтса пĕлет, çавăн чухлех çăмха пама сĕнет. Ачасем çăмхисене карточкăн аялти ярăмĕ çине вырнаçтараççĕ.

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, кăштах канса илер-и? «Хăвăн çуртна туп» хускануллă вăйă выльăпăр.

Кавир çинче геометри фигурисем (çаврашка, тăваткал, виç кĕтеслĕх) выртаççĕ. Ачасем пĕрер геометри фигурине илеççĕ, унăн ятне калаççĕ те кĕвĕ çеммипе хускалаççĕ. Кĕвĕ вĕçленнĕ хыççăн вĕсен хăйсен «çурчĕсене» тупмалла: алăра çаврашка пуррисем çаврашка патне чупаççĕ тата ыт. те. Ачасем хăйсен вырăнĕсене йышăнсан воспитатель вĕсенчен мĕншĕн ун пек суйласа илнине ыйтать.

Вăййа тăсса воспитатель геометри фигурисен вырăнĕсене улăштарать.

Заняти вĕçĕнче пĕр-пĕр юрă юрлаççĕ.

# НАРĂС УЙĂХĔНЧЕ ИРТТЕРМЕЛЛИ ВĔРЕНТӲЛЛĔ ВĂЙĂСЕМ

## *1-мĕш вăйă*

## Танлаштарма вĕренер-и?

***Тĕллевсем:*** япала ушкăнĕсене танлаштарасси (япаласене пĕр-пĕрин çине хурса танлаштарни), *нумайрах, пĕр тан, çавăн чухлĕ – мĕн чухлĕ* сăмах çаврăнăшĕсемпе усă курасси.

Геометри фигурисене (*çаврашка, тăваткал, виç кĕтеслĕх*) уйăрасси, ăнлавсене çирĕплетесси.

Япаласем çывăх хутлăхра епле вырнаçнине сăмахпа кăтартни (*çӳлте, аялта*).

***Кăтарту хатĕрĕсем:*** фланелеграф, çаврашка, тăваткал, виç кĕтеслĕх, чăрăш, валеçсе пама – ятарлă карточкăсем, хытă хутран касса тунă чăрăшсемпе мулкачсем (кашни ача валли 5-шер); чăрăш ӳкерчĕкĕсем (15–20 см çӳллĕш); икĕ тĕслĕ пысăк тата пĕчĕк геометри фигурисем (çаврашкасем, тăваткалсем, виç кĕтеслĕхсем).

В ă й ă  ю х ă м ĕ

Воспитатель ачасене «В лесу родилась ёлочка» юррăн пайне итлеме сĕнет. Çĕнĕ çул уявне аса илтерет. Уявра чи капăр йывăç чăрăш пулнине палăртса хăвараççĕ. Унтан воспитатель ачасене карточкăсем валеçсе парать, ĕçсене пурнăçлама ыйтать.

В о с п и т а т е л ь. Çӳлти кĕсьесене чăрăшсем вырнаçтарăр. Мĕн чухлĕ чăрăш вырнаçтартăр?

А ч а с е м. Нумай.

В о с п и т а т е л ь. Кашни чăрăш айне пĕр мулкач вырнаçтарăр.

Воспитатель япаласене вырнаçтармалли правилăсене аса илтерет.

В о с п и т а т е л ь. Миçе мулкач?

А ч а с е м. Нумай.

В о с п и т а т е л ь. Миçе чăрăш?

А ч а с е м. Нумай.

В о с п и т а т е л ь. Чăрăшпа мулкач шучĕ пĕр тан-и? Ун пирки мĕн калама пулать?

Ачасем ыйту çине хуравланă чухне нумай, пĕр тан, çавăн чухлех, мĕн чухлĕ сăмахсемпе усă кураççĕ.

В о с п и т а т е л ь. Чăрăш илемлĕ пултăр тесен, ун çине теттесем çакмалла. Акă кунта теттесем те пур.

Фланелеграф çинче геометри фигурисене кăларса хунă: çаврашка, тăваткал, виç кĕтеслĕх (чăрăш валли теттесем). Воспитатель ачасене фигурăсене калама, вĕсен енĕсемпе кĕтесĕсене кăтартма ыйтать.

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, атьăр-ха çак теттесемпе чăрăша илемлетер.

Воспитатель ачасене чăрăш ӳкерчĕкĕсем валеçсе парать, тĕрлĕ теттесемпе (геометри фигурисемпе) илемлетме сĕнет. Ĕçе пурнăçланă май ачасем чăрăш çинчи фигурăсен ятне, пысăкăшне, тĕсне каласа пыраççĕ.

В о с п и т а т е л ь.

Чăрăш илемленчĕ,
Кăмăл та çĕкленчĕ.
Юр юрлар-и савăнса,
Вăйă картине тăрса!

Ачасем чăрăш тавра вăйă картине тăраççĕ, Çĕнĕ çул юрри юрлаççĕ.

*2-мĕш вăйă*

## Кайăксене çитеретпĕр

***Тĕллевсем:*** япаласен çӳллĕшне танлаштарасси, *çӳллĕ – лутра, çӳллĕрех – лутрарах* сăмахсен пĕлтерĕшне ăнланасси, *нумайрах, пĕр тан, çавăн чухлĕ – мĕн чухлĕ* ăнлавсемпе ĕçлесси.

Япаласем çывăх хутлăхра епле вырнаçнине сăмахпа палăртни (*çӳлте, аялта*).

***Кăтарту хатĕрĕсем:*** çӳллĕшĕпе расна икĕ чăрăш; хытă хутран тунă хӳме, çерçисем (кашни ача валли), тĕрлĕрен çӳллĕшлĕ хӳмесем (кашни ачана 2-шер хӳме), тырă пĕрчисем.

В ă й ă ю х ă м ĕ

Воспитатель ачасене хĕллехи вăрман пирки каласа парать. Унтан сĕтел çинчи икĕ чăрăша кăтартать.

В о с п и т а т е л ь. Çав йывăççем мĕн ятлă? Вĕсен çӳллĕшĕ пĕр пек-и?

Воспитатель кашни чăрăша аялтан çӳлелле аллипе кăтартса ăнлантарать.

В о с п и т а т е л ь. Ку чăрăш çӳллĕ, ку чăрăш лутра.

Унтан ачасемпе ĕçлет.

В о с п и т а т е л ь. Çак чăрăш çӳллĕшĕ пирки мĕн калама пулать?

Ҫӳллӗ (лутра) чӑрӑш ҫине кӑтартса воспитатель ачасене *ҫӳллӗрех, лутрарах* сӑмахсемпе ӗҫлеттерет, Ю. Сементерӗн «Чӑрӑш» сӑввӑн сыпӑкне вулать.

В о с п и т а т е л ь.

Йӗплӗ чӑрӑш шӗвӗр тӑррипе
Кармашать ҫӳле, хӗвел енне,
Ҫуркуннен сип-симӗс тумӗпе
Вӑл ҫулла, хӗлле те кӗркунне.

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, атьӑр-ха, чӑрӑш тавра хӳме (карта) тӑвар.

Воспитатель ачасене хӳмесене пӑхса тухма тата вӗсене ҫӳллӗшпе танлаштарма сӗнет.

В о с п и т а т е л ь. Хӳмесен ҫӳллӗшӗ пӗр пек-и? Ҫакна мӗнле пӗлме пулать?

Ачасем хӳмесене пӗр-пӗрин ҫине е юнашар хурса танлаштараҫҫӗ. Унтан воспитатель ыйтнипе ҫӳллӗ чӑрӑша ҫӳллӗ хӳмепе картласа лартаҫҫӗ, лутра чӑрӑша – лутра хӳмепе, хӳмесене тепӗр хут танлаштараҫҫӗ. Воспитатель ачасем *ҫӳллӗрех, аяллӑрах* сӑмахсемпе усӑ курнине сӑнать, кирлӗ чух пулӑшса пырать.

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, чӑрӑша кичем пуль. Ӑна хаваслӑрах пултӑр тесе хӳме ҫине кайӑксене вырнаҫтарар.

Воспитатель сӗтел ҫине хытӑ хутран тунӑ хӳме лартать, ун тӑррине ҫерҫисем (ача *мӗн чухлине кура*) вырнаҫтарать.

В о с п и т а т е л ь. Карта ҫинче миҫе ҫерҫи ларать?

А ч а с е м. Нумай.

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, кайӑксене хӗлле сивӗ, вӗсен ҫиес килет.

Воспитатель ҫерҫисене ҫитерме сӗнет. Кашни кайӑка пӗрер пӗрчӗ параҫҫӗ.

В о с п и т а т е л ь. Сирӗн алӑра миҫӗ пӗрчӗ? Эсир кайӑксене мӗн чухлӗ патӑр?

А ч а с е м. Кашни ҫерҫие пӗрер пӗрчӗ патӑмӑр.

В о с п и т а т е л ь. Ҫерҫипе тырӑ пӗрчи мӗн чухлӗ пулни пирки мӗн калама пулать? Миҫе кайӑк – тырӑ пӗрчи те ҫавӑн чухлӗ пулчӗ.

Вӑйӑ вӗҫӗнче ачасем кӗвӗ ҫеммипе ҫерҫи вӑййисем выляҫҫӗ: вӗҫеҫҫӗ, пӗрчӗсем сӑхаҫҫӗ, сиккелеҫҫӗ.

*3-мĕш вăйă*

## Тӳрĕ тикĕс çулпала…

***Тĕллевсем:*** япаласен çӳллĕшне танлаштарасси, *çӳллĕ – лутра, çӳллĕрех – лутрарах* ăнлавсемпе усă курасси, япаласен шутне тĕрлĕ мелпе танлаштарасси (япаласене пĕр-пĕрин çине е юнашар хурса), *пĕр тан, мĕн чухлĕ – çавăн чухлĕ* ăнлавсемпе ĕçлесси.

***Кăтарту хатĕрĕсем:*** çӳллĕшĕпе расна икĕ матрёшка (ӳкерчĕксем), тĕрлĕ çӳллĕшлĕ пирамидка ӳкерчĕкĕсем (кашни ача валли 2-шер пирамидка), ятарлă карточкăсем, подноссем çинче – тăваткалсем тата виç кĕтеслĕхсем (кашни ача валли 5-шер), кубиксенчен тунă гаражсем, машинăсем.

В ă й ă  ю х ă м ĕ

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, паян эпир сирĕнпе тетте лавкине кайăпăр! Кам хатĕр кайма? Атьăр, ларăр автобус çине, вĕçтертĕмĕр!

Уйăп Мишшин «Автобус» сăввине калаççĕ: «Тӳрĕ тикĕс çулпала…»
Ачасем воспитательпе пĕрле тетте лавккине çитеççĕ. Ачасем лавккара матрёшкăсене пăхса тухаççĕ те воспитатель ыйтнипе вĕсене танлаштараççĕ, *çӳллĕрех* е *лутрарах* тесе палăртаççĕ.

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, пăхăр-ха, кунта пирамидкăсем те сутаççĕ.

Воспитатель ачасене пирамидкăсене пăхса тухма, çӳллĕ (лутра) пирамидкăна кăтартма сĕнет.

В о с п и т а т е л ь. Миша, эсĕ хăш пирамидкăна туянасшăн: лутрине-и е çуллине? Катя, эсĕ хăшне туянасшăн?

Ачасем пирамидка çӳллĕшне çӳллĕ е лутра тесе палăртаççĕ.

В о с п и т а т е л ь. Катя, сан пирамидка çӳллĕрех-и е Мишăн пирамидки çӳллĕрех?

Воспитательпе пĕрле ачасем пирамидкăсене танлаштараççĕ – е юнашар хураççĕ, е ӳкерчĕксене пĕр-пĕрин çине хурса танлаштараççĕ.

В о с п и т а т е л ь. Лавккара тата пӳрт тумалли хатĕрсем те пур.

Воспитатель ачасене карточкăсем тата геометри фигурисем (тăваткалсем тата виç кĕтеслĕхсем) валеçсе тухать.

В о с п и т а т е л ь. Çурт тума мĕнле фигурăсем кирлĕ?
А ч а с е м. Тăваткалсем тата виç кĕтеслĕхсем.
В о с п и т а т е л ь. Карточкăн аялти кĕсийисене тăваткалсене хурăр. Пӳрт тăррине тăвас тесен мĕнле фигурăсем илмелле?

А ч а с е м. Виҫ кӗтеслӗхсем.

В о с п и т а т е л ь. Кашни тӑваткал ҫине пӗр виҫ кӗтеслӗх хурӑр. Мӗн чухлӗ тӑваткал, ҫаван чухлӗ виҫ кӗтеслӗх пулчӗ. Тӑваткалсемпе виҫ кӗтеслӗхсен шучӗ пӗр тан.

Ачасем вопситатель хыҫҫӑн каласа пыраҫҫӗ.

В о с п и т а т е л ь. Тӑваткалсемпе виҫ кӗтеслӗх мӗн чухлӗ пулни пирки мӗн калама пулать?

А ч а с е м. Мӗн чухлӗ тӑваткал, ҫаван чухлӗ виҫ кӗтеслӗх пулчӗ. Тӑваткалсемпе виҫ кӗтеслӗхсен шучӗ пӗр тан.

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, лавккаран тухрӑмӑр. Халӗ вара килелле таврӑнар. Атьӑр, ларӑр автобус ҫине, вӗҫтертӗмӗр!

Уйӑп Мишшин «Автобус» сӑввине каласа утаҫҫӗ.

В о с п и т а т е л ь. Пӑхӑр-ха кунталла. Кавир ҫинче пире гаражсем кӗтеҫҫӗ.

Кавир ҫине гаражсене ачасем мӗн чухлине кура лартса тухнӑ.
Воспитатель ачасене кашнине хӑйне килӗшекен гараж патне пыма ыйтать, машинӑсемпе выляма сӗнет. Ачасем кӗвӗ ҫеммипе утаҫҫӗ: ҫулсем тӑрӑх машинӑсем чупаҫҫӗ, светофор тӗлӗнче чарӑнаҫҫӗ. Кӗвӗ вӗҫленнӗ хыҫҫӑн ачасем гаража машинӑсене лартаҫҫӗ.

В о с п и т а т е л ь. Пирӗн миҫе машина? Миҫе гараж? Машинӑсемпе гаражсен шучӗ пӗр пек-и? (*Ачасем хуравлаҫҫӗ.*)

Воспитатель ачасене *мӗн чухлӗ, ҫавӑн чухлӗ, пӗр тан* ӑнлавсемпе ӗҫлеттерет.

## *4-мӗш вӑйӑ*
## Художнике пулӑшар-и?

***Тӗллевсем:*** япаласен ҫӱллӗшне танлаштарасси, *ҫӱллӗ – лутра, ҫӱллӗрех – лутрарах* ӑнлавсемпе усӑ курасси, япаласен шутне тӗрлӗ мелпе танлаштарасси (япаласене пӗр-пӗрин ҫине е юнашар хурса), *пӗр тан, мӗн чухлӗ – ҫавӑн чухлӗ* ӑнлавсемпе ӗҫлесси.

***Кӑтарту хатӗрӗсем:*** ӳкерчӗкӗсем – сӑмсасӑр 5 юр кӗлетке, 5 кишӗр, 2 пӗр тӗслӗ хутаҫ, валеҫсе пама – ятарлӑ карточкӑсем, юр пӗрчисемпе эрешленӗ алсиш (кашни ача валли 4-шар алсиш); юр пӗрчисӗр алсиш (кашни ача валли 1-ер алсиш); тӗрлӗ ҫӱллӗшлӗ 2 чӑрӑш (кашни ача валли).

В ӑ й ӑ ю х ӑ м ӗ

Воспитатель ачасене Л. Николаева ҫырнӑ «Юр кӗлетке» сӑвва вуласа парать.

В о с п и т а т е л ь.

Йăваларăм, йăваларăм –
Юр кĕлетке купаларăм.
Тыттартăм шăпăр аллине,
Кишĕр – сăмса вырăнне.
Пуç çинче вара – витре.
Манăн тусăм пит хитре!

Унтан ачасене ӳкерчĕк кăтартать.

В о с п и т а т е л ь. Художник мĕн ӳкернĕ?
А ч а с е м. Юр кĕлетки.
В о с п и т а т е л ь. Художник миçе юр кĕлетки ӳкернĕ?
А ч а с е м. 5 юр кĕлетки.
В о с п и т а т е л ь. Художник мĕн ӳкерме маннă?
А ч а с е м. Юр кĕлеткен сăмсине.
В о с п и т а т е л ь. Ачасем, художнике пулăшар-ха.

Ачасемпе пĕрле воспитатель кишĕрсене саркаласа хурать (пĕр кишĕрĕ çитмест).

В о с п и т а т е л ь. Миçе юр кĕлетки?
А ч а с е м. 5 юр кĕлетки.
В о с п и т а т е л ь. Миçе кишĕр?
А ч а с е м. 4 кишĕр.
В о с п и т а т е л ь. Кашни юр кĕлеткин кишĕр пур-и?
А ч а с е м. Çук.
В о с п и т а т е л ь. Мĕн ытларах: юр кĕлетки-и е кишĕр-и?
А ч а с е м. Юр кĕлетки ытларах.
В о с п и т а т е л ь. Мĕн сахалтарах: кишĕр-и е юр кĕлетки-и?
А ч а с е м. Кишĕр сахалтарах.
В о с п и т а т е л ь. Вĕсене пĕр тан тăвас тесен мĕн тумалла?
А ч а с е м. Тепĕр кишĕр илсе хумалла.

Ачасем воспитательпе пĕрле художник йăнăшне тӳрлетеççĕ: тепĕр кишĕр илсе хураççĕ. Воспитатель ачасене малалла ыйтусем парса калаçтарать.

В о с п и т а т е л ь. Халĕ кашни юр кĕлеткин кишĕр пур-и?
А ч а с е м. Пур.
В о с п и т а т е л ь. Юр кĕлеткипе кишĕр шучĕ пирки мĕн калама пулать?
А ч а с е м. Вĕсен шучĕ пĕр тан.

Воспитатель кашни ачана карточка парать – юр пĕрчисемпе эрешленĕ 4 алсиш, юр пĕрчисĕр 1 алсиш.

В о с п и т а т е л ь. Художник юр пĕрчисем ӳкерсе алсиш касса кăларчĕ. Айтăр алсишсене карточкăсем çине вырнаçтаратпăр.

В о с п и т а т е л ь. Миçе алсиш сирĕн?

А ч а с е м. Нумай.

В о с п и т а т е л ь. Алсишсем мĕнле – пĕр пек-и е тĕрлĕрен?

А ч а с е м. Пĕрисен юр пĕрчи пур, теприн юр пĕрчи çук.

В о с п и т а т е л ь. Хăш алсишĕ сахалтарах: юр пĕрчиллĕ алсиш е юр пĕрчисĕрри?

А ч а с е м. Юр пĕрчисĕр алсиш сахалтарах.

В о с п и т а т е л ь. Хăш алсишĕ нумайрах: юр пĕрчиллĕ алсиш е юр пĕрчисĕрри?

А ч а с е м. Юр пĕрчиллĕ алсиш нумайрах.

В о с п и т а т е л ь. Художник йăнăшне мĕнле тӳрлетме пулать?

Ачасем воспитательпе пĕрле япаласене шайлаштармалли майсене тĕрĕслеççĕ.

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, юр кĕлеткин сăмсине тупрăмăр, алсиш тăхăнтартăмăр. Юр кĕлеткине мĕнле йывăç çумне лартма пулать?

А ч а с е м. Чăрăш çумне.

Ачасен тĕрлĕ çӳллĕшлĕ 2 чăрăш. Воспитатель вĕсене танлаштарма ыйтать, *çӳллĕ (лутра)* чăрăша кăтартма сĕнет, унтан пĕр хутаçа çӳллĕ чăрăшсене, теприне – лутрисене хума сĕнет, кашни ачана мĕнле чăрăш хунине калаттарать.

# ПУШ УЙĂХĔНЧЕ ИРТТЕРМЕЛЛИ ВĔРЕНТӲЛЛĔ ВĂЙĂСЕМ

*1-мĕш вăйă*

## Мулкачсене хăналар-и?

***Тĕллевсем:*** япаласен шутне тĕрлĕ мелпе танлаштарасси (япаласене пĕр-пĕрин çине е юнашар хурса), *пĕр тан, мĕн чухлĕ – çавăн чухлĕ, ытларах, сахалрах* ăнлавсемпе ĕçлесси.

Геометри фигурисене (*çаврашка, тăваткал, виç кĕтеслĕх*) уйăрасси, ăнлавсене çирĕплетесси.

***Кăтарту хатĕрĕсем***. Фланелеграф; кушак çурисемпе карçинкка ӳкерчĕкĕсем (5-шер), тĕрлĕ геометри фигурисем (çаврашка, тăваткал, виç кĕтеслĕх), поднос, валеçсе пама – ятарлă карточкăсем, хытă хутран касса кăларнă мулкачсемпе канфетсем (кашни ачана 5-шер), тĕрлĕ тĕслĕ пысăк тата пĕчĕк геометри фигурисем (çаврашка, тăваткал, виç кĕтеслĕх – кашни ачана пĕрер).

В ă й ă   ю х ă м ĕ

Воспитатель А. Хум сăвви тăрăх йĕркеленĕ тупмалли юмах калать.

В о с п и т а т е л ь.

Пăç-пăç-пăç! тесе чĕнеççĕ,
Хăвалаççĕ прис! тесе. Мĕне?

А ч а с е м. Кушака.

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, пирĕн патра хăнара паян – кушак çурисем. Тарса ан пĕтчĕр тесе вĕсене карçинкккана лартар.

Ачасем фланелеграф çине карçинккасем вырнаçтараççĕ те кашни карçинкккана пĕрер кушак çури лартаççĕ.

В о с п и т а т е л ь. Карçинккасем пирĕн мĕн чухлĕ? Миçе кушак çури? Карçинккасемпе кушак çурисен шучĕ пирки мĕн калама пулать?

Ачасем *пĕр тан, мĕн чухлĕ – çавăн чухлĕ* ăнлавсемпе хуравлаççĕ.

В о с п и т а т е л ь. Пăхăр-ха, ачасем, кушак çурисем карçинккаран сиксе тухрĕç, пĕри тарчĕ. (*Пĕр кушак çурине илсе хурать.*) Халĕ карçинккасем е кушак çурисем ытларах?

А ч а с е м. Карçинккасем.

В о с п и т а т е л ь. Мĕн сахалрах: кушак çурисем е карçинккасем?

А ч а с е м. Кушак çурисем.

В о с п и т а т е л ь. Карçинккасемпе кушак çурисене пĕр тан тăвас тесен мĕн тумалла?

Ачасем воспитательпе карçинккасемпе кушак çурисене пĕр тан тăвас тесе тăрăшаççĕ.

В о с п и т а т е л ь. Халĕ кушак çурисемпе карçинккасем пĕр тан-и?

Ачасем *пĕр тан, мĕн чухлĕ – çавăн чухлĕ* ăнлавсемпе хуравлаççĕ.
Воспитатель ачасене хытă хутран касса кăларнă мулкачсемпе канфетсем валеçсе парать. «Мулкач çурисем» сăвва вулать, ачасем мулкач çурисен хусканăвĕсене пурнăçлаççĕ.

В о с п и т а т е л ь.

Мулкач ларать пашкаса,
Ик хăлхине вылятса.
Ак çапла, ак çапла
Ик хăлхине вылятса.
Тӳсеймерĕ сиввине,
Ăшăтать вăл тяппине.
Ак çапла, ак çапла
Ăшăтать вăл тяппине.
Сивĕрех ăна тăма,
Вăл пуçларĕ ташлама.
Ак çапла, ак çапла
Вăл пуçларĕ ташлама.

Ачасем воспитательпе пĕрле хусканусем тăваççĕ.

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, карточкăсемпе ĕçлетпĕр. Çӳлти кĕсйине мулкачсене вырнаçтаратпăр. Миçе мулкач сирĕн?

А ч а с е м. Нумай.

В о с п и т а т е л ь. Айтăр вĕсене канфетсемпе хăналар.

Воспитатель ачасене канфетсем валеçет (мулкачсенчен сахалтарах), вĕсене ачасем карточкăн аялти кĕсйине (кашни мулкач айне) вырнаçтараççĕ.

В о с п и т а т е л ь. Миçе мулкач? Мĕн чухлĕ канфет? Кашни мулкачăн канфет пур-и? Мулкач е канфет ытларах? Мĕн сахалтарах: канфет-и е мулкач-и? Канфетпа мулкачсем пĕр тан пулччĕр тесен мĕн тумалла?

Ачасем ыйтусем çине хуравлаççĕ, канфетпа мулкачсен хисепне шайлаштараççĕ.

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, атьăр канса илер, «Çавăн пек фигура туп» вăйă выляр.

Кавир ҫинче геометри фигурисем выртаҫҫӗ.

В о с п и т а т е л ь. Эсир мӗнле фигурăсене куратăр?

Ачасем фигура ячӗсене каласа тухаҫҫӗ (ҫаврашка, тăваткал, виҫ кӗтеслӗх).
Воспитатель пӗр ачана сӗтел ҫинчи подносран пӗр фигура илме хушать.
Унтан ачасем кӗвӗ ҫеммипе утаҫҫӗ, кӗвӗ вӗҫленнӗ хыҫҫăн кавир ҫинче те ҫавăн пек фигурăсемех тупаҫҫӗ.
Фигурăсем улшăннипе вăйă 2-3 хут пулса иртет.

*2-мӗш вăйă*

## Машинăсемпе вылятпăр

***Тӗллевсем:*** япала ушкăнӗсене танлаштарасси; *пӗр пек, ҫавăн чухлӗ – миҫе, нумайрах, сахалрах* сăмах ҫаврăнăшӗсемпе усă курма хăнăхтарасси; икӗ япалан вăрăмăшпе ҫӳллӗшне танлаштармалли меслетсене ҫирӗплетесси, танлаштарнă результата кирлӗ сăмахсемпе палăртасси.

***Кăтарту хатӗрӗсем:*** ҫӳллӗ хӗрлӗ тата лутра кăвак хапха, пукансем (ача шутӗнчен пӗрре нумайрах), валеҫсе пама – тӗрлӗ вăрăмăшлă симӗспе сарă тӗслӗ «ҫулсем», машинăсем (кашни ача валли икшер).

В ă й ă  ю х ă м ӗ

Вăйă пӳлӗмре, кавир ҫинче иртет.

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, эсир машинăсемпе ярăнма юрататăр-и?

А ч а с е м. Юрататпăр.

В о с п и т а т е л ь. Паян пурте шоферсем пулатпăр. Малтан мӗнле ҫулпа каймаллине пăхăпăр. Акă кашин умӗнче икӗ ҫул. Пирӗн малтан кӗске ҫулпа каймалла, унтан вăрăм ҫулпа. Хăш ҫулӗ кӗске, хăшӗ вăрăм? Мӗнле пӗлетпӗр?

Ачасем вăрăм ҫулпа кӗске ҫула танлаштармалли меслет шыраҫҫӗ.

В о с п и т а т е л ь. Симӗс ҫул вăрăм-и? Е сарă ҫул вăрăм? Сарă кӗске ҫулпа каятпăр, машинăсене илтӗмӗр, кустаратпăр.

Ачасем машинăсемпе выляҫҫӗ. Воспитатель кавир ҫине хӗрлӗ тата кăвак хапха лартать.

В о с п и т а т е л ь. Ҫула кунта тата хапхасем картлаҫҫӗ. Хапхасем ҫинчен мӗн калама пулать? Вӗсен шучӗ пӗр пек-и?

Ачасем *пӗр пек, ҫавăн чухлех* сăмахсемпе усă курса хуравлаҫҫӗ.
Воспитатель ачасене ҫӳллӗ хапха витӗр упаленсе тухма хушать, унтан аяллинчен.
Унтан ачасене хӗрлӗпе кăвак хапхасен ҫӳллӗшне танлаштарма хушать.

В о с п и т а т е л ь. Хăш хапхаран тухма çăмăлрах пулчĕ? Ăçта выран нумайрах?

Воспитатель ачасен хуравĕсене итлет, тӳрлетет, ытлашши хатĕрсене пуçтарать, пĕр рете «гаражсем» (пукансем) лартса тухать, ачасене çĕнĕ вăйă сĕнет.

В о с п и т а т е л ь. «Автомобильсем тата гаражсем» вăйă вылятпăр. Сирĕн алăра миçе машина?

А ч а с е м. Пĕрре.

В о с п и т а т е л ь. Çак машинăна лартма миçе гараж кирлĕ?

А ч а с е м. Пĕрре.

Воспитатель сигнал панă хыççăн юрă кĕввипе ачасем машинăсене ярăнтарма тытăнаççĕ. Воспитатель мĕнле хусканусем тумаллине каласа пырать: сылтăмалла, сулахаялла, çаврăм туса çӳре. Кĕвĕ пĕтсессĕн ачасем машинисене гаража лартаççĕ.

В о с п и т а т е л ь. Пур машин валли те гараж çитрĕ-и?

А ч а с е м. Çитрĕ.

В о с п и т а т е л ь. Машинăпа гараж шучĕ пирки мĕн клама пулать?

Ачасем *пĕр пек, çавăн чухлех* сăмахсемпе усă курса хуравлаççĕ.
Вăййа малалла выляççĕ. Воспитатель пĕр гаражне айккине илсе хурать.

В о с п и т а т е л ь. Халĕ пур машин валли те гараж çитрĕ-и?

А ч а с е м. Çук, çитмерĕ.

В о с п и т а т е л ь. Мĕн нумайрах? Мĕн сахалрах? Кашни машин гаража пултăр тесен мĕн тумалла?

Ачасем япаласене танлаштармалли меслет шыраççĕ.
Малалла вылянă чухне воспитатель пĕр гараж ытларах лартать, ачасене япала ушкăнĕсене танлаштарма ыйтать, унтан пĕрпеклетмелли мел туптарать.

### *3-мĕш вăйă*

### Вĕçсе килчĕç кайăксем

***Тĕллевсем:*** пĕр тан мар япала ушкăнĕсене танлаштарма вĕрентесси; *пĕр пек, çавăн чухлĕ – миçе, нумайрах, сахалрах* сăмах çаврăнăшĕсемпе усă курма хăнăхтарасси.

Талăкăн пайĕсене, кăнтăрлапа каçа уйăрма вĕрентесси, çĕнĕ сăмахсене пуплеве кĕртесси.

***Кăтарту хатĕрĕсем*:** фланелеграф, пилĕк кайăк, пилĕк пĕрчĕ, вылякан ача ӳкерчĕкĕ, çывăракан ача ӳкерчĕкĕ, валеçсе пама – ятарлă карточкăсем,

чӳречесӗр шӑнкӑрч вӗллисен ӳкерчӗкӗсем (кашни ачана 5-шер), ҫаврашкасем (вӗллесенчен пӗрре сахалрах).

### В ӑ й ӑ ю х ӑ м ӗ

Кайӑксен юрри янӑрать.

В о с п и т а т е л ь.

Юр ирӗлет, ҫырма юхать.
Чӳречерен хӗвел пӑхать.
Вӗҫен кайӑксем юрлаҫҫӗ,
Ҫуркуннене пурте мухтаҫҫӗ.

Воспитатель фланелеграф ҫине кайӑксен ӳкерчӗкӗсене ҫирӗплетсе хурать.

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, ҫуркунне ҫитрӗ, ӑшӑ ҫӗр-шывран кайӑксем вӗҫсе килчӗҫ. Миҫе кайӑк вӗҫсе килнӗ?

А ч а с е м. Нумай.

В о с п и т а т е л ь. Атьӑр кайӑксене тулӑ пӗрчисем парса хӑналатпӑр. Чӗнсе илнӗ ачасем кашни кайӑка тулӑ пӗрчи «параҫҫӗ», фланелеграф ҫине ҫыпӑҫтараҫҫӗ.

В о с п и т а т е л ь. Миҫе пӗрчӗ?

А ч а с е м. Нумай.

В о с п и т а т е л ь. Кашни кайӑк валли пӗрчӗ пур-и? Вӗсен шучӗ пирки мӗн калама пулать?

А ч а с е м. Кашни кайӑк валли пӗрчӗ пур. Миҫе кайӑк, ҫавӑн чухлӗ пӗрчӗ.

Воспитатель кайӑка е пӗрче илсе хурать.

В о с п и т а т е л ь. Кайӑксем нумайрах-и е пӗрчӗсем? Мӗн сахалрах: пӗрчӗсем е кайӑксем? Кайӑксемпе пӗрчӗсем пӗр пек пултӑр тесен мӗн тумалла?

Ачасем япаласен ушкӑнне мӗнле майпа пӗрпеклетмеллине ӑнлантарса параҫҫӗ.

В о с п и т а т е л ь. Кайӑксем ҫисе тӑранчӗҫ. Халӗ вара вӗсене канма вӗлле кирлӗ.

Воспитатель ачасене карточкӑсем тата шӑнкӑрч вӗлли ӳкерчӗкӗсене валеҫсе тухать. Ачасем шанкӑрч вӗллисене карточка кӗсйине чикеҫҫӗ.

В о с п и т а т е л ь. Шӑнкӑрч вӗлли нумай-и?

А ч а с е м. Нумай.

В о с п и т а т е л ь. Кайӑксем хӑйсен ҫуртне пурӑнма кӗме пултараҫҫӗ-и? Мӗншӗн? (*Ачасен хуравӗсем.*) Кайӑксем хӑйсен ҫурчӗсене вӗҫсе кӗччӗр тесен, мӗн тума пулать? (*Чӳречесем е алӑк тумалла.*)

Воспитатель ачасене çаврашкасем парса тухать, ачасем вĕсенчен «чӳрече» тăваççĕ.

В о с п и т а т е л ь. Пĕтĕм вĕллен «чӳрече» пур-и? Мĕн нумайрах? Мĕн сахалрах? Пĕр пек пултăр тесен мĕн тумалла?

Воспитатель ачасен хуравĕсене итлет, кирлĕ пулсан пулăшать, тӳрлетет.

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, кайăксем апат çирĕç, канма кайрĕç. Эпир те канса илер, «Кăнтăрла – каç» вăйă выляр.

Вăйă пуçламăшĕнче воспитатель ачасенчен кăнтăрла мĕн тунине ыйтать.
Калаçăва çирĕплетме вăл малтан вылякан ача ӳкерчĕкне кăтартать, унтан – çывăракан ача ӳкерчĕкне. Ача хăçан çывăрма выртнине ыйтать, *кăнтăрла*, *каçпа* сăмахсене темиçе хутчен калаттарать.
Ун хыççăн воспитатель хаваслă кĕвĕпе сăпка юррине ылмаштарса, *кăнтăрла* е *каç* сăмахсене калать. Хавалслă кĕвĕ янăранă чух ачасем выляççĕ, сикеççĕ, сăпка юрри янраса кайсан чарăнаççĕ те çывăрса кайнă пек тăваççĕ.
Вăййа 2-3 хут выляççĕ.

*4-мĕш вăйă*

## Хăнара – чĕр чунсем

***Тĕллевсем:*** япаласен вăрăмăшне танлаштармалли мелсене çирĕплетесси, танлаштарнă результата кирлĕ сăмахсемпе паллă тăвасси.

Сасăсене уйăрма хăнахтарасси (нумай е пĕр сасă).

Геометри фигурисене (*çаврашка, тăваткал, виç кĕтеслĕх*) уйăрасси, ăнлавсене çирĕплетесси.

***Кăтарту хатĕрĕсем:*** фланелеграф; вăкăр, шăши, шапа, мулкач, курак, сысна çурисем ӳкернĕ ӳкерчĕксем; 3-4 чăрăш; тĕрлĕ вăрăмăшлă икĕ çул, çаврашка, тăваткăл, виç кĕтеслĕх геометри фигурисем ӳкернĕ çуртсем; валеçсе пама – çаврашка, тăваткал, виç кĕтеслĕх (кашни ачана пĕр фигура).

В ă й ă ю х ă м ĕ

Воспитатель фланелеграф çине вăкăрпа чăрăшсене çирĕплетсе хурать.

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, асаттепе асанне килте пĕр вăкăр усранă. Пĕррехинче вăкăр курăк çисе вăрмана çитиех çитет те аташса каять. Киле каяс çула вăкăр шапаран, шăширен, мулкачран, куракран ыйтать (*ӳкерчĕксем çыпăçтарса пырать*). Кашни чĕр чун вăкăра хăй мĕнле юрланине итлеме ыйтать, юрринче пĕрре е нумай сасă пулнине пĕлме ыйтать.

Ачасем, вăкăра пулăшатпăр-и?

А ч а с е м. Пулăшатпăр.

В о с п и т а т е л ь. Шапа юррине итлер-ха. Шапа: «Квак! Квак!» – тет. Кунта миçе сасă – пĕрре е нумай?

А ч а с е м. Нумай.

Ытти чĕр чунсен юррисене те çапла итлесе сасăсене уйăраççĕ, нумай е пĕр сасă пулнине калаççĕ.
Çак ĕçе пурнăçланă май чĕр чунсем вăкăра вăрмантан илсе тухаççĕ.
Унтан воспитатель фланелеграф çине сысна çурисен ӳкерчĕкĕсене, кĕске тата вăрăм çулсене çирĕплетсе хурать.

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, мĕнле юмахран-ши ку сысна çурисем?

А ч а с е м. Виçĕ сысна çури.

В о с п и т а т е л ь. Халĕ эпир сысна çурисене кашкăртан тарса пытанма пулăшатпăр. Чĕр чунсен умĕнче вăрăм çулпа кĕске çул выртать. Вăрăм çула (кĕскине) кăтартăр. Вĕсене мĕнле танлаштарма пулать.

Ачасем çулсене танлаштараççĕ, Воспитатель *вăрăмрах, кĕскерех* сăмахсене калаттарать.

В о с п и т а т е л ь. Хăш çулĕпе чупсан сысна çурисем кашкăртан тарса ĕлкĕрме пултараççĕ?

Воспитатель ачасен хуравĕсене итлет, мухтать.

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, атьăр эпир те «Кашкăртан таратпăр» вăййă выляр. Анчах та сирĕн тимлĕ пулмалла.

Воспитатель урайне геометри фигурисем ӳкернĕ çуртсене хурса тухать.
Çавăн пек фигурăсене ачасене пĕрершер валеçсе тухать. Ачасенчен пĕрне кашкăр маскине парать.

В о с п и т а т е л ь. «Виçĕ сысна çури» юмахри юрă кĕвви янраса кайсан, эпир сирĕнпе уçланкăра çӳретпĕр. «Кашкăр» тухсан кашни хăйĕн çуртне тарать: камăн аллинче тăваткал, вĕсем тăваткал ӳкернĕ çурт патне чупаççĕ, камăн виç кĕтеслĕх – виç кĕтеслĕх ӳкернĕ çурта, камăн çаврашка – çаврашка ӳкернĕ çурта.

Кĕвĕ янăрать, ачасем пӳлĕмре чупаççĕ, «кашкăр» тухать, ачасене тытасшăн. Воспитатель ачасем хăйсен çурчĕсене тĕрĕс суйланипе суйламаннине тĕрĕслет, фигурăсен ячĕсене калаттарать.

# АКА УЙĂХĔНЧЕ ИРТТЕРМЕЛЛИ ВĔРЕНТӲЛЛĔ ВĂЙĂСЕМ

*1-мĕш вăйă*

## Машăпа Даша хăнара

***Тĕллевсем:*** япаласене шутне кура (хисепне палăртмасăр, тĕслĕхри пек) ушкăнлама вĕрентесси; паллакан геометри фигурисене уйăрассине çирĕплетесси.

***Кăтарту хатĕрĕсем:*** фланелеграф, икĕ пукане, пĕр пек тĕслĕ тата пысăкăшлă виçĕ çаврашкаран тăракан икĕ «шăрçа», кăвак тата хĕрлĕ тĕслĕ тăваткал, валеçсе пама – ятарлă карточкăсем, картонран касса кăларнă çаврашкасем (кашни ачана 3-шер), виç кĕтеслĕхсем (кашни ачана 4-шар), тĕрлĕ тĕслĕ виç кĕтеслĕхсем тата тăваткăлсем.

В ă й ă   ю х ă м ĕ

Воспитатель фланелеграф çине шăрçа (виçĕ çаврашка) çирĕплетсе хурать.

В о с п и т а т е л ь. Ку Машăн шăрçи (*пукане кăтартать*). Шăрçа мĕн тĕслĕ? Шăрçа пĕрчи мĕнле фигурăна аса илтерет?

Воспитатель ачасен хуравĕсене итлет, калаçма хавхалантарать. Унтан ачасене карточка салатса парать.

В о с п и т а т е л ь. Дашăн та шăрçа çакас килет (*тепĕр пукане кăтартать*). Атьăр эпир Даша валли шăрçа пуçтарар. Малтан пĕр шăрçа пĕрчине хуратпăр, унтан теприне, вара тата теприне.

Ачасем сĕтел хушшинче шăрçа пуçтараççĕ, вĕсене карточкăн çӳлти кĕсйине чикеççĕ. Пĕр ача фланелеграф çине çирĕплетет.

В о с п и т а т е л ь. Машăпа Дашăн шăрçисем пирки мĕн калама пулать? (*Фланелеграф çинчи шăрçасене танлаштараççĕ.*) Пĕрчĕсем нумай-и? Вĕсен шучĕ пĕр пек-и?

В о с п и т а т е л ь. Сирĕн карточкăсенче те шăрçа пулчĕ. Халь кашни шăрçă пĕрчи айне çавăн чухлех виç кĕтеслĕх хуратпăр. Пурте вырнаçрĕç-и?

А ч а с е м. Пĕри юлчĕ.

В о с п и т а т е л ь. Çаврашкасемпе виç кĕтеслĕхсем карточкăра нумай-и?

А ч а с е м. Нумай.

В о с п и т а т е л ь. Вĕсен шучĕ пĕр тан-и? Мĕн нумайрах? Мĕн сахалтарах?

А ч а с е м. Шăрçа пĕрчи сахалтарах.

В о с п и т а т е л ь. Миçе шăрçа пĕрчи çавăн чухлĕ виç кĕтеслĕх пултăр тесен мĕн тумалла?

А ч а с е м. Пĕр виç кĕтеслĕхне илмелле.

Воспитатель карточкăсене пуçтарса илет.

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, пăхăр-ха, Машăпа Дашăн аллинче темле фигура пур. (*Тăваткал кăтартса.*) Ку мĕнле фигура?

А ч а с е м. Ку тăваткал.

В о с п и т а т е л ь. Дашăн аллинче мĕн?

А ч а с е м. Тăваткал.

В о с п и т а т е л ь. Машăн кăвак тĕслĕ тăваткал, Дашăн – хĕрлĕ. Вĕсем пĕр-пĕринпе туслă выляççĕ, мĕншĕн тесен вĕсен пĕр пек фигура пур.

Воспитатель ачасене тĕрлĕ тĕслĕ тăваткăлсемпе виç кĕтеслĕхсем валеçсе тухать те фигурăсен мăшăрне тупма хушать.

В о с п и т а т е л ь. Халĕ, ачасем, эсир хăвăр валли юлташ тупăр, сирĕн юлташăн аллинче сирĕнни пек фигура пулмалла.

Ачасем ушкăнсем çине пайланаççĕ. Вăййа виçĕ-тăватă хут выляççĕ.

*2-мĕш вăйă*

## Циркра

***Тĕллевсем:*** япаласене шутне кура (хисепне палăртмасăр, тĕслĕхри пек) ушкăнлама вĕрентесси; япала пысăкĕшне *пысăк, пĕчĕк* ăнлавсемпе усă курса танлаштарасси.

Япаласем çывăх хутлăхра епле вырнаçнине сăмахпа кăтартасси (*çӳлте, аялта, умра, хыçра).*

***Кăтарту хатĕрĕсем:*** фланелеграф, пысăк тата пĕчĕк клоунсем, тетте – йытă, çаврашкасем (4 штук), шакăртма, тĕрлĕрен пысăкĕшлĕ ӳкернĕ теттесем, кĕвĕ инструменчĕсем, тăхăнмалли япаласен карточкисем, пĕр йĕрлĕ карточкăсем, çаврашкасем (кашни ача валли 4 шт.)

В ă й ă ю х ă м ĕ

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, паян эпир циркра пулса курăпăр. Циркра кам пулса курнă? Унта мĕн-мĕн курма пулать? Çапла, циркра клоун пур, чĕр чунсем пур. Пирĕн пата паян клоун хăнана килнĕ. Унпа пĕрле унăн йытти.

Воспитатель фланелеграф çине клоун çирĕплетсе хурать. Ачасене çĕнĕ тетте, унăн йыттине, кăтартать.

В о с п и т а т е л ь. Клоун йытти ăслă, клоун çаврашка хумассерен йытă вĕрет.

Воспитатель фланелеграф çине çаврашка çирĕплетет, йытă «вĕрет».

В о с п и т а т е л ь. Атьăр эпир клоунпа пĕрле ĕçлетпĕр.

Ачасене карточка, çаврашкасем валеçсе парать.
Клоун хыççăн йытă вĕрмессерен ачасем хăйсен карточкисем çине пĕрер çаврашка хурса пыраççĕ. Пĕтĕм çаврашкасене хурса пĕтерсен, воспитатель ачасем миçе çаврашка хунине тĕрĕслет, *пĕрре, нумай* ăнлавсемпе ĕçлет.

В о с п и т а т е л ь. Клоун сире мухтать, маттур ачасем тет.

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, пирĕн пата тепĕр клоун хăнана килчĕ.

Фланелеграф çине пĕчĕк клоун çирĕплетсе хурать.

В о с п и т а т е л ь. Ку клоунсем пирки мĕн калама пулать?

А ч а с е м. Пĕри пĕчĕккĕ, тепри – пысăк.

В о с п и т а т е л ь. Атьăр клоунсене япаласем, теттесем парнелетпĕр. Пысăк клоун валли мĕнле япаласемпе теттесем кирлĕ-ши? Пĕчĕкки валли мĕнлисем?

Воспитатель поднос лартать, поднос çинче пысăк тата пĕчĕк теттесен, кĕвĕ инструменчĕсен, тăхăнмалли япаласен ӳкерчĕксем.
Ачасем пысăкăшне танлаштарса тĕрлĕ япала ӳкернĕ карточкăсене суйласа илеççĕ: пысăк теттесем, кĕвĕ инструменчĕсем пысăк клоун валли, пĕчĕккисене – пĕчĕкки валли.

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, клоунсем питĕ савăннă, вĕсем сирĕнпе шăнкăравла вылясшăн.

Воспитатель ачасене куçĕсене хупма хушать те хăй шăнкăрава шăнкăртаттарать, ачасене сасă ăçтан илтĕннине пĕлме ыйтать (çӳлте, аялта, умра, хыçра).
Вăййа 2-3 хут выляççĕ.

## *3-мĕш вăйă*
## Хăнара – пуканепе упа

***Тĕллевсем:*** тĕслĕхри пек пĕрре тата нумай хускану тăвасси, *пĕрре, нумай, пĕрре те çук* сăмахсен пĕлтерĕшне ăнланаса çирĕплетесси.

Япаласем çывăх хутлăхра епле вырнаçнине сăмахпа каласа кăтартасси (*çӳлте, аялта, умра, хыçра, сулахайра, сылтăмра).*

Уйрăм япаласене ушкăнлама хăнăхтарасси.

***Кăтарту хатĕрĕсем:*** пукане, упа, валеçсе пама – ятарлă карточкăсем, шарсем, хĕрлĕ, кăвак тата сарă çаврашкасем.

### В ӑ й ӑ  ю х ӑ м ӗ

Воспитатель хӑнана пуканепе упа ҫури килнине пӗлтерет (теттесем). Вӗсем садикри ачасем мӗн тума пултарнине пӗлесшӗн иккен.

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, пуканепе упа сире ташлама вӗрентесшӗн (пукане – воспитатель, упа – ача). Пукане мӗн чухлӗ хускану туса кӑтартать, упа та ҫавӑн чухлӗ хускану тӑвать. Ачасем, сирӗн те вара вӗсен хыҫҫӑн ҫавӑн чухлех хускану тумалла.

Тӗслӗхрен: пукане 3 хут алӑ ҫупать, упа – ун хыҫҫӑн, ачасем – упа хыҫҫӑн. Пукане ташлама та пӗлет. Пукане 3 хут урипе тапать, упа – ун хыҫҫӑн, ачасем – упа хыҫҫӑн. Вӑййа 2-3 хут выляҫҫӗ.

В о с п и т а т е л ь. Пуканепе упа сире валли шарсем илсе килнӗ. Миҫе шар?

А ч а с е м. Нумай.

Воспитатель вӗсене тимлӗн пӑхма хушать. Вылянӑ вӑхӑтра ачасем шарсен тӗсне тата формине калаҫҫӗ.

В о с п и т а т е л ь. Вӑйлӑ ҫил вӗрчӗ те шарсем вӗҫсе кайрӗҫ (шарсене илсе хурать). Пуканепе упан миҫе шар тӑрса юлчӗ?

А ч а с е м. Пӗрре те ҫук.

Воспитатель ачасене пӗрер шар валеҫет.
Ачасем упапа пуканен хушӑвӗсене пурнӑҫлаҫҫӗ: «Шара сылтӑм алла илӗр. Шар хӑш алӑра? Халӗ сулахай алла хурӑр. Шара ҫӳлелле ҫӗклӗр. Шар ӑҫта? Шара антарӑр. Шара ҫурӑм хыҫне пытарӑр. Шара хӑвӑр умма тытӑр».
Вӑйӑ вӗҫленсен воспитатель шарсене аякалла илсе хурать.

В о с п и т а т е л ь. Пуканепе упа сире тата вӑйӑ выляттарасшӑн.

Воспитатель ачасене карточкӑсем, хӗрлӗ, кӑвак тата сарӑ тӗслӗ ҫаврашкасем парса тухать.
Пуканепе упа тӗрлӗ тӗслӗ ҫаврашкасене кӑтартаҫҫӗ. Ҫаврашкасен йӗрки ҫакӑн пек: хӗрлӗ, кӑвак, сарӑ, хӗрлӗ. Воспитатель ачасене ҫавӑн пек йӗркепе карточка кӗсйине ҫаврашкасене хурса тухма хушать, унтан мӗнле хунине тӗрӗслет.

В о с п и т а т е л ь. Маттур, ачасем! Пуканепе упа сире мухтаҫҫӗ. Тата шарсемпе выляс килет, теҫҫӗ.

Ачасене шарсем панӑ хыҫҫӑн воспитатель упапа пуканен миҫе шар юлнине ыйтса пӗлет.

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, сирӗн аллӑрсенче мӗн чухлӗ шар?

А ч а с е м. Пӗрер шар.

В о с п и т а т е л ь. Упапа пукане аллинче миҫе шар?

А ч а с е м. Пĕрер шар.

Ачасем упапа пуканене ăсатса яраççĕ, хăйсем шарсемпе малалла выляма пултараççĕ.

## *4-мĕш вăййă*
## Вĕçсе килчĕç лĕпĕшсем

***Тĕллевсем:*** япаласене тĕсне кура ушкăнласси, хисепе *нумай, пĕрре* сăмахсемпе каласси.

***Кăтарту хатĕрĕсем:*** фланелеграф, ятарлă карточка, хĕрлĕ, симĕс, сарă тĕслĕ лĕпĕшсен тата чечексем – кашни ача валли пĕчĕк тата пысăк ӳкерчĕксем, воспитатель валли.

В ă й ă  ю х ă м ĕ

Вăййă пуçламăшĕнче воспитатель ачасене хăй хыççăн тĕрлĕ хусканусем тума ыйтать: сикме, утма, çаврăнма, чарăнма. Ачасенчен мĕн чухлĕ хускану тунине ыйтса пĕлет (пĕрре е нумай).

В о с п и т а т е л ь. Эпир савăннине курса пирĕн пата лĕпĕшсем вĕçсе килчĕç (фланелеграф çине хĕрлĕ, симĕс, сарă лĕпĕш çыпăçтарать). Мĕн тĕслĕ лĕпĕшсем вĕçсе килнĕ? Мĕн чухлĕ лĕпĕш – пĕрре е нумай?

Воспитатель ачасен хуравĕсене итлет. Унтан карточкăсемпе ĕçлеме пуçлать.

В о с п и т а т е л ь. Пĕр сарă лĕпĕш илĕр те карточкăн çӳлти кĕсйине чикĕр.

Тĕслĕхпе ĕçлеççĕ: хĕрлĕ, симĕс, сарă лĕпĕшсем.

В о с п и т а т е л ь. Лĕпĕшсем вĕçсе ывăнсан чечек çине ларса канаççĕ. Кашни лĕпĕш валли хăйĕн тĕслĕ чечек тупăр, карточкăн аялти кĕсйине чикĕр.

В о с п и т а т е л ь. Халĕ эсир ачасем кашниех лĕпĕш пулатăр. Хамăр валли чечек шыратпăр.

Воспитатель урайне сарă, хĕрлĕ, симĕс чечексем хурса тухать (ачасен шутне кура), ачасене пысăк лĕпĕш ӳкерчĕкĕсене валеçсе парать.
Кĕвĕ янăрать, ачасем-лĕпĕшсем «вĕçсе» çӳреççĕ. Кĕвĕ пĕтсен лĕпĕшсене чечексем çине лартса тухаççĕ. Кашни лĕпĕшĕн хăйĕн тĕслĕ чечек çине лармалла.
Кашни вылямассерен воспитатель урайĕнчи чечексен вырăнĕсене улăштарать.
Вăййа 2-3 хут выляççĕ.

# ÇУ УЙĂХĔНЧЕ ИРТТЕРМЕЛЛИ ВĔРЕНТӲЛЛĔ ВĂЙĂСЕМ

*1-мĕш вăйă*

## Пукане садике каять

***Тĕллевсем:*** япала ушкăнĕсене танлаштарасси, тан тăвасси, *нумайрах – сахалрах* ăнлавсемпе усă курасси. Япаласене пысăкашне кура ушкăнласси.

Япаласем çывăх хутлăхра епле вырнаçнине сăмахпа кăтартасси (*çӳлте, аялта, умра, хыçра, шалта, çумра*).

**Кăтарту хатĕрĕсем:** пысăк тата пĕчĕк пуканесем, пуканен сĕтел-пуканĕ, пуканен уçăлса çӳремелли тумтирĕсем; тӳме йăллиллĕ кофтăсен ӳкерчĕкĕсем тата тӳмесем (çаврашка) – кашни ача валли.

В ă й ă ю х ă м ĕ

Воспитатель пӳлĕме пысăк пукане илсе кĕрет. Ачасене унпа паллаштарать. Пукане ирех вăраннă иккен, ӳт-пӳ пайĕсене каласа зарядка тăвать.

П у к а н е (П.Эйзин сăввине калать).

Тяп-тяп утма
тяппи пур.
Çат-çат тума
алли пур.
Нăш-нăш тума
сăмси пур.
Чăр-чăр пăхма
куçĕ пур.

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, пуканене кичем, атьăр пулашатпăр.

Ачасем пуканепе пĕрле сăвă калаççĕ, хусканусем тăваççĕ.

В о с п и т а т е л ь. Пукане çăвăнчĕ, зарядка турĕ. Халĕ унăн тăхăнса садике каймалла. Ăçта-ши пукане япалисем?

Кавир çинче пукане валли сĕтел-пукан вырнаçтарнă пӳлĕм моделĕ. Пукане тумтирне кравать çине, тенкел çине, айне тата шкаф ăшне хурса тухнă. *Аялта, çумĕнче, çинче, айĕнче, шалта, ăшĕнче* сăмахсемпе усă курса ачасем воспитательпе пĕрле пуканен япалисене тупаççĕ, унăн тумтирĕ ăçта выртнине ăнлантарса параççĕ.

В о с п и т а т е л ь. Пуканене тумлантартăмăр. Садике илсе килтĕмĕр. Кунта ачасем тĕрлĕ ĕç-пуç тăваççĕ иккен. Атьăр пуканене те кăтартатапăр хамăр мĕн тунине.

Воспитатель кашни ачана тӳме йăллисемпе ӳкернĕ кофтăсем тата тӳмесем (йăлăсенчен пĕр тӳме сахалрах) валеçсе парать.
Воспитатель ачасене кашни йăлă патне тӳме çĕлеме (хума) хушать.

В о с п и т а т е л ь. Йăлăсем мĕн чухлĕ? Миçе тӳме? Мĕн нумайрах: йăлăсем-и е тӳмесем-и? Мĕн сахалрах? Кашни йăлă валли тӳме пултăр тесен мĕн тумалла?

Воспитатель ачасен хуравĕсене итлет, кирлĕ пулсан тӳрлетет.
Кашни ачана калаçтарма тăрашать.

В о с п и т а т е л ь. Пирĕн пуканен йăмăкĕ те садике çӳрет (пĕчĕк пукане кăтартать).

Воспитатель ачасене пуканесен пысăкăшне танлаштарма хушать. Пысăк пукане валли пысăк япаласем, пĕчĕк пукане валли пĕчĕк япаласем шыраса тупма хушать.
Ачасем малалла пуканесене тумтир тăхăнтартса уçăлма илсе тухаççĕ.
Пуканесене хăйсем пĕлекен кирек мĕнле сăвă каласа параççĕ.

## *2-мĕш вăйă*
## Эпир ăста ачасем

***Тĕллевсем:*** геометри фигурисене (*çаврашка, тăваткал, виç кĕтеслĕх*) уйăрасси, ăнлавсене çирĕплетесси.

***Кăтарту хатĕрĕсем:*** тĕрлĕ тĕслĕ тата пысăкăшлă çаврашкасем, виç кĕтеслĕхсем, тăваткалсем, хутаçра выртакан тĕрлĕ тĕслĕ тата пысăкăшлă кубсемпе шарсем, валеçсе пама – патаксем (кашни ачана 4-шар хĕрлĕ, 3-шер симĕс патак), вĕренсем (хăю).

В ă й ă ю х ă м ĕ

Вăйă пуçламăшĕнче воспитатель Петĕр Ялкир çырнă «Ташăçăсем» сăвва калать, ачасене хăй хыççăн тĕрлĕ хусканусем тутарать (алă çупаççĕ, çаврăнаççĕ тата ыт. те).

В о с п и т а т е л ь.

Эпир ăста – юрăра,
Пултаруллă – ташăра.
Ри-та, ри-та, ри-та-та,
Пултаруллă ташăра.

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, куратăр-и, мĕнле маттур эпир! Юрлатпăр,

ташлатпăр, вăйăсем вылятпăр. Эпĕ сире валли вăйă хатĕрлерĕм, вăл «Ытлашши фигурăна туп» ятлă.

Воспитатель ачасене черетпе карточкăсем çине ӳкернĕ геометри фигурисене (çаврашкана, тăваткала, виç кĕтеслĕхе) кăтартать, тĕрлĕ ыйтусем парса ĕçлеттерет.

В о с п и т а т е л ь. Ку фигурăсем мĕн ятлă?

А ч а с е м. Çаврашка, тăваткал, виç кĕтеслĕх.

В о с п и т а т е л ь (пĕчĕк тата пысăк фигурăсене кăтартса). Фигурăсем мĕнпе уйрăлса тăраççĕ? Фигурăсем пĕр пек-и? Хăш фигури ытлашши? Мĕншĕн?

А ч а с е м. Кусем çаврашкасем, иккĕшĕ пысăк, пĕри пĕчĕк. Пĕчĕкки ытлашши.

Воспитатель фигурăсене тĕрлĕ майлă ушкăнлать. Пĕр пеклĕхпе уйрăмлăхĕсене тупаççĕ. Кашни ачана хавхалантарса хуравлаттарать.

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, эсир çаврашкана, тăваткала, виç кĕтеслĕхе паллатăр ĕнтĕ. Хамăр та фигурăсем туса пăхар-и?

Воспитатель кашни ачана 4 хĕрлĕ тата 3 симĕс тĕслĕ патак, вĕрен (хăю) валеçсе парать. Унтан вăл ачасене хĕрлĕ патаксенчен тăваткал тума, унтан унăн енĕсене кăтартма ыйтать. Малалла ачасем вĕренрен çаврашка тăваççĕ те аллисемпе йĕрлесе тухаççĕ. Симĕс патаксенчен виç кĕтеслĕх тăваççĕ. Унăн енĕсемпе кĕтесĕсене кăтартаççĕ.

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, эсир питĕ маттур, чăн-чăн ăстаçăсем. Эпĕ сире валли асамлă хутаç илсе килтĕм. *(Хутаç кăларать.)* Мĕн пытаннă-ши унта? Ачасем, сирĕн асамлă хутаçра мĕн пытаннине пĕлес килет-и?

Хутаçра тĕрлĕ тĕслĕ пысăк тата пĕчĕк кубсемпе шарсем выртаççĕ. Ачасем геометри фигурисене хыпашласа пĕлеççĕ, ятне калаççĕ, хутаçран кăлараççĕ, фигура мĕн тĕслĕ пулнине калаççĕ. Вăйăра кашни ачана хутшăнтарма тăрăшмалла.

## *3-мĕш тата 4-мĕш вăйăсем*
## Ман юратнă вăйăсем

Воспитатель программăпа килĕшӳллĕн хатĕрленĕ ирĕклĕ ĕçсем туса ирттерет, ачасене килĕшнĕ вăйăсене çирĕплетет.

## ТУПМАЛЛИ

*Умĕн калани* .................................................................................... 3

Авăн уйăхĕнче ирттермелли вĕрентӳллĕ вăйăсем ........................... 4

Юпа уйăхĕнче ирттермелли вĕрентӳллĕ вăйăсем ............................ 7

Чӳк уйăхĕнче ирттермелли вĕрентӳллĕ вăйăсем.............................. 14

Раштав уйăхĕнче ирттермелли вĕрентӳллĕ вăйăсем........................ 19

Кăрлач уйăхĕнче ирттермелли вĕрентӳллĕ вăйăсем ........................ 25

Нарăс уйăхĕнче ирттермелли вĕрентӳллĕ вăйăсем .......................... 35

Пуш уйăхĕнче ирттермелли вĕрентӳллĕ вăйăсем ............................ 40

Ака уйăхĕнче ирттермелли вĕрентӳллĕ вăйăсем.............................. 47

Çу уйăхĕнче ирттермелли вĕрентӳллĕ вăйăсем................................ 52

**3–4 ÇУЛХИ АЧАСЕНЕ МАТЕМАТИКĂН АНСАТ ĂНЛАВĔСЕМПЕ ПАЛЛАШТАРАССИ**

---

**ФОРМИРОВАНИЕ ЭЛЕМЕНТАРНЫХ МАТЕМАТИЧЕСКИХ ПРЕДСТАВЛЕНИЙ У ОБУЧАЮЩИХСЯ 3–4 ЛЕТ**

Методические указания для воспитателей дошкольных образовательных организаций, реализующих образовательные программы дошкольного образования с детьми 3–4-летнего возраста

Составители *И.В. Ядранская, Л.А. Смирнова*
Редактор *Р.П. Прокопьева*
Верстка *И.В. Матвеевой*

Подписано в печать . Формат 60х90/16. Бумага офсетная.
Печать офсетная. Тираж: 50 экз. Заказ № .

БУ ЧР ДПО «Чувашский республиканский институт образования»
Минобразования Чувашии.
428001, Чувашская Республика, г. Чебоксары, пр. М. Горького, 5.

Отпечатано в типографии «Перфектум».
г. Чебоксары, ул. К. Маркса, д. 52. Тел.: (8352) 32-05-0